# Юратнă вĕрентекенсене уявпа саламлатпăр!


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

40(858) №, 2014, юпа, 4

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


**Чăваш Енĕн хисеплĕ педагогĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Вĕрентекен ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, хисеплĕ тата яваплă. Педагог ăслă та тимлĕ, ăшă кăмăллă пулнинчен унăн вĕренекенĕсен малашлăхĕ нумай килет.

Паянхи условисенче Чăваш Республикин патшалăх политики вĕрентӳ тытăмне çĕнетес, вĕренӳ учрежденийĕсенче конкурентлăха тивĕçтерекен, хăйсен пултарулăхĕпе туллин усă курма пултаракан çамрăксене çитĕнтерме кирлĕ условисем йĕркелес тĕллевлĕ.

Чăваш Ен вĕрентекенĕсен çитĕнĕвĕсене федераци шайĕнче тивĕçлипе хакласçĕ. 2014 çулта республикăн 10 педагогĕ Пĕтĕм Раççейри вĕрентекенсен Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 200 пин тенкĕлĕх премине илмелли конкурсĕн çĕнтерӳçисем пулса тăчĕ. Раççейĕн чи лайăх 500 шкулĕн списокне республикăри 6 вĕренӳ учрежденийĕ кĕчĕ – Шупашкар хулинчи 3, 4-мĕш лицейсем, 1, 4 тата 5-мĕш гимназисем, Çĕнĕ Шупашкар хулинчи 6-мĕш гимнази. Çĕр-шывăн ялсенчи чи лайăх 200 шкулĕн шутĕнче – Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ шкул, Йĕпреçри 1-мĕш шкул, Патăрьелĕнчи 1-мĕш шкул, Вăрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ шкул тата Вăрнарти 2-мĕш шкул.

Хаклă туссем!

Чăвашсен аслă вĕрентекенĕ Иван Яковлев хăйĕн «пĕлӳ илме телей пӳрнĕ» йăхташĕсене пехилленĕ май «тăвансем патне наука пĕлĕвĕн пуянлăхĕпе таврăнма, вĕсен хушшинче гражданлăх ăнлавне çирĕплетме, вĕсене саккунпа правăна вĕрентме» хушса хăварнă.

Гражданлăх, чыс тата совеç ăнлавĕсем çĕнĕ сĕм илме тытăннă паянхи тĕнчере çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Паян вĕрентекеншĕн пысăк сас паллирен çыракан, пĕлӳ паракан профессионал пулни çеç çителĕксĕр. Педагогăн чи пĕлтерĕшлĕ тивĕçĕ – Раççей Федерацийĕн чăн-чăн гражданинне воспитани парса çитĕнтересси, ăна хăй тĕллĕн тата ăнланса тĕрĕс йышăнусем тума, вĕсемшĕн явап тытма вĕрентсе пурнăç çулĕ çине тухмашкăн хатĕрлесси.

Сирĕн чĕрĕрте профессие юратнин çулăмĕ ялан ялкăштăр, пархатарлă ĕçĕр куллен кăмăла çĕклетĕр, ырă çимĕçсем кӳтĕр!

Сире çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу тата пархатарлă вĕренекенсем сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**



# Ачасем шанчăклă алăра

Вĕрентекенсен кунне халалласа ĕнер Шупашкарти трактор тăвакансен культура керменĕнче пысăк уяв пулчĕ. Унта республикăри учительсен хорĕсен конкурсĕнче мала тухнисем тупăшрĕç.

Ку ăмăрту Чăваш Енре пĕрремĕш хут иртнине те палăртмалла. Культура çулталăкне халалланă ăна. Конкурс икĕ тапхăрпа иртнĕ. Республикăри мĕн пур районпа хулари 26 коллектив малтан хăйсен пĕчĕк ушкăнĕнче тупăшнă. Çапла вара ĕнер сцена çине Патăрьел, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Муркаш, Вăрмар, Красноармейски, Канаш районĕсенчи тата Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенчи хорсем тупăшрĕç. Пĕтĕмпе – 11 хор. Виçĕ номинацире палăртрĕç вĕсене. «Чăвашла юрăпа» мала тухакансем – Канаш районĕнчи хор. «Вырăсла юрă» илемлĕ шăрантаракансем – Муркаш районĕн учителĕсем. «Вĕрентекен профессине халалланă юрă» номинацире Канаш хулинчи учительсен хорĕ палăрчĕ.

– Вĕрентекенĕн чунĕ юрлать пулсан – пирĕн ачасем шанчăклă алăра, – терĕ ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов учительсене саламласа. Ăна уявра «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ят пачĕç.

Хăнăхнă йăлапа уявра наградăсемпе, парнесемпе савăнтараççĕ. Ку хутĕнче те ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ вĕренӳ çулĕнче палăрнисене хавхалантарчĕ. Шупашкарти электромеханика колледжĕн директорне Алексей Судленкова «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа наградăларĕ. Çĕмĕрлери 1-мĕш вăтам шкулта ĕçлекен Галина Алексеева, Красноармейски районĕнчи Упинчи вăтам шкулта тăрăшакан Иван Матвеев, 3-мĕш лицейра вăй хуракан Ирина Васильева «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» ята тивĕçрĕç. 2-мĕш лицей директорĕ Татьяна Петрова «Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята илме тивĕç пулчĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

*Ăслă çынпа калаççан ăс пухăнать.*
**Каларăш.**

**“Чăваш хĕрарăмне” çитес çур çуллăха çырăнма васкăр!**

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 04.10 | + 4 | + 3 |
| 05.10 | + 7 | + 2 |
| 06.10 | + 8 | + 2 |
| 07.10 | + 8 | + 1 |
| 08.10 | + 6 | + 3 |
| 09.10 | + 7 | + 3 |
| 10.10 | + 6 | 0 |



ВĔРЕНӲ

**Професси уявĕ умĕн Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕпе Валентина Беловăпа тĕл пултăмăр. Халĕ тивĕçлĕ канура вăл. Апла пулин те пĕрре те ахаль лармасть. Пахча тулли тĕрлĕ çимĕç, чечек-курăк ӳстерет. Сивĕ кунсем çывхарнине пăхмасăр тĕрлĕ илем сӳнменччĕ-ха унăн пахчинче. Çавăнпах çулла кунта мĕн тери çăтмах пулнине куç умне кăларма та çук-тăр.**

**– Йĕри-тавра тутлă шăршă сарăлтăр тесе ятарласа ырă шăршăллă табак, маттиола, каçхи фиалка, петуни, мирабилис акатăп. Каçхине сак çине тухса ларатăп та çак илемпе савăнатăп. Чечекĕсем те хитре, шăрши тата мĕне тăрать! – хавхаланса каласа кăтартать Валентина Александровна. – Эпĕ çут çанталăка питĕ юрататăп. Вăрмана çӳреме килĕштеретĕп. Хура кĕркунне те темиçе хутчен çитсе килетĕп, мĕншĕн тесен унта пачах урăх сывлăш.**

# «Классика нихăçан та ывăнтармасть»



### Кĕреплепе те пуçтарса пĕтерес çук...

– Кăмпа та пуçтаратăр пулĕ. Пурне те паллатăр-и? – кăсăкланатăп эпĕ.

– Çиме юрăхлипе юрăхсăррине лайăх уйăратăп. Кăçал темĕн тĕрлĕ кăмпа та пур. 2 витре хыр кăрăçĕ пухрăм. Шурă кăмпа та самаях тупрăм. Масла кăмпи, хурăн кăрăçĕ, сыпăкли – вăрман тулли.

Çут çанталăка Валентина Александровна мĕн ачаранах юратать. Ара, ял ачи вĕт. Вăрмар районĕнчи Арапуç тăрăхĕнче те вăрмансем пур. Ашшĕ вăрçăран урасăр таврăннăскер ир вилнĕ. Амăшĕ пĕрмай вăрман касма çӳренĕ. Çаппине киле илсе кайма ирĕк панă. Ара, пӳрте хутса ăшăтмалла вĕт – çавна турттарнă Валентина пĕртен-пĕр шăллĕпе. Аслисемпе мăйăра та нумай çӳренĕ.

– Çичĕ-сакăр çул мăйăр пулманччĕ, кăçал вара чылай. Йĕкел те йышлă. Çут çанталăк нумай çимĕç пачĕ ку çул. Пахчара та мĕн пур çимĕç тухăçлă çитĕнчĕ. Пан улми кун чухлĕ пулнине пачах та ас тумастăп. Кĕреплепе те пуçтарса пĕтерме çук. Шăтăка тултартăм пĕтĕмпех – ăшă йăран чаврăм. Пĕлтĕр те çавăн пекех тунăччĕ, – тет ăш пиллĕ хĕрарăм.

### Агроном пуласшăнччĕ

Тавралăха, çут çанталăка çав тери юратнăран ăна биолог теес килет. Вăл вара – вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ.

– Агроном пулас кăмăл пысăкчĕ. Тырă уй-хирĕ тăрăх утса çӳрес килетчĕ. Тухтăр ĕçĕ те илĕртетчĕ. 10 класс пĕтерсен агрегат заводне кайрăм. Çулталăк фрезеровщикра тăрăшрăм. Инженер пулма шухăшланăччĕ. Чул хулари политехника институтне направлени паратпăр терĕç. Юлташ хĕрĕ килчĕ те Канашри педагогика колледжне пыма хистерĕ. Кайрăмăр та хатĕрленмесĕрех кĕтĕмĕр. Çапла вĕренсе те тухрăмăр, – çамрăк чухнехине аса илет Валентина Белова.

1965 çулта аллине диплом илсен вăл Вăрмарти вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентме тытăнать. Кăштахран хăйсен ял каччипех Василипе çемье çавăраççĕ. Хусанта выльăх тухтăрне вĕреннĕскере Краснодар тăрăхне яраççĕ. Йĕппи ăçта – çиппи те çавăнта тенешкел çамрăк арăм та мăшăрĕнчен юлмасть. Унта вĕсен аслă хĕрĕ Оля çуралать. Шел, вăл çамрăклах çĕре кĕнĕ. Икĕ çултан Беловсем Чăваш Ене таврăнаççĕ. Ял хуçалăх министерстви Василий Константиновича Çĕрпӳ районĕнчи Кăнар хуçалăхне ярать.

Ку тăрăха килсен малтанах хĕрарăм Чăрăш Туçара пионервожатăйра ĕçлет. Икĕ çултан ăна педагогика институтне филологи факультетне вĕренме яраççĕ. Çав çулах вăл Кăнарти вăтам шкулта вырăс чĕлхи вĕрентме тытăнать.

Литература учителĕнчен, паллах, камăн пултарулăхне ытларах килĕштернине ыйтса пĕлтĕм. 18-19-мĕш ĕмĕрсенчи произведенисене кăмăллать вăл. Толстой, Достоевский хайлавĕсене, Лермонтовпа Пушкин сăввисене халĕ те час-часах тытса вуланине пытармасть.

– Паянхи пурнăçпа хальхи ыйтусене çĕр-ик çĕр çул каяллах уçса-кăтартса панă вĕсем. Çамрăк писательсене хакламастăп. Донцовăпа Устиновăна вуламастăп та, – пытармасть Валентина Александровна. – Чăваш литератури те пуян. Илпек Микулайĕн "Хура çăкăр" романне килĕштеретĕп. Темле пулсан та классика темиçе хутчен тытсан та ывăнтармасть.

### "Ĕçрен вăхăтра каймалла"

Шкула çӳреме пăрахсан та пĕрре те тунсăхламан вĕрентекен. Ара, унăн чун киленĕçĕ пур-çке – çĕр ĕçĕ. Унсăр пуçне вăл тĕрлеме юратать. Малтанах алла йĕппе çип тытма вăхăт çитмен пулсан халĕ пĕчченех пурăнаканскер кăмăл туличчен тирет йĕппине. Темĕн тĕрлĕ илемлĕ картина ăсталать.

– Ĕçрен вăхăтра каймалла – хăваласа яриччен. Ячĕшĕн те пулсан кăштах ĕçле тетчĕр, – кулать ырă кăмăллăскер.

Тивĕçлĕ канура пулин те вĕрентекен тивĕçне манма памаççĕ ăна. Хăй ăс панă ачасен ачисене пулăшать тепĕр чухне, экзамена хатĕрлет.

– Вĕренекенсем манманни хавхалантарать. Кашни çулах тĕл пулăва чĕнеççĕ, – хăпартланать Валентина Александровна.

Кукамăшне икĕ мăнукĕ тунсăхлама памаççĕ. Шупашкарта пурăнакан Илга хĕрĕн Ярославпа Таня çитĕнет.

### Картари пурнăç

– Çулĕ çитмĕле çитсен те чунĕ çамрăк, ватăлмасть, – сăмах çăмхине малалла сӳтет вăл. – Йывăр вăхăта лексен те ачалăх вăл яланах хаваслă, çав тери пуян, интереслĕ. Эпир ӳснĕ чухне ялта çамрăк нумай пулнă. Вăййа тухнă. Çулла каç пулсан ялта купăс сасси каймастчĕ. Виçĕ-тăватă тĕлте такмак каласа юрлатчĕç-ташлатчĕç.

– Купăс сасси аса килсен тунсăх пусмасть-и? – тĕпчетĕп.

– Халĕ ялсенче шăп. Çамрăксем çукпа пĕрех. Пурри те эрех ĕçет. Интереслĕ пурăнма пĕлмеççĕ – компьютер кăна кирлĕ вĕсене. Çамрăксемпе ваттисем ĕлĕкхи пек туслă пурăнмаççĕ. Çурт-йĕрне чăх-чĕп вĕçсе каçайми карталаса илеççĕ те никампа хутшăнмасăр пурăнаççĕ, – тарăн шухăшне палăртать Валентина Белова.

– Йăла-йĕрке каялла таврăнмастех пулĕ. Çапах та савăнмалли те пур: пушă çуртсене туянаççĕ. Хула халăхĕ ялалла туртăнни сисĕнет. Кивĕ пӳртсене илеççĕ, юсаççĕ, çĕнетеççĕ. Уйсенче тырă вырăнне йывăç ӳсни пăшăрхантарать тата. Хирсене акса-сухалаççĕ-ха, анчах пурне те мар-çке. Колхоз-совхоз вăхăтĕнче йăлтах сухаланă. Тракторпа кĕрейменнине алпа чавнă, – вĕçлерĕ калаçăва вĕрентекен.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

# Çуралсассăн çĕр çине этем...

Çуралсассăн çĕр çине этем: ӳсет, вĕренет, мăшăрланса çемье çавăрать, ачисене тĕрĕс воспитани пама тăрăшать...

– Пирĕн аттепе анне пĕр ялтанах пулнă, 1922 çулта мăшăрланса çичĕ ача таранах çуратнă. Çынна курайми тискер чунлă Адольф Гитлер çарĕ СССР çине вăрçăпа кĕрсен аттепе Егор Филипповичпа аслă пичче Николай Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме фронта тухса кайрĕç. Эпĕ – çемьере тăваттăмĕш ача. Вăрçă пуçланнă çул пĕрремĕш класа çӳреме пуçларăм. Çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан колхоз ĕçне хаваспах хутшăнтăм. Атте, вăрçăччен кладовщик пулнăскер, председатель тивĕçĕсене пурнăçлатчĕ. Аслă пичче Николай пединститутра вĕреннĕ хыççăн тĕрлĕ шкулта ĕçлерĕ. Виталий пиччепе Анатолий шăллăм ялтах тымар ячĕç, трактористра тăрăшрĕç.

25-е çывхарсан 1958 çулта Чурпайри Федор Петров хăйĕн мăшăрĕ пулма ыйтрĕ, ĕмĕр тăршшĕпех савса пурăнма шантарчĕ. Çапла эпĕ Хĕветĕр арăмĕ пулса тăтăм, – терĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чурпай ялĕнче пурăнакан 81-ти Мария Егоровна ачалăхпа çамрăклăх çулĕсене аса илнĕ май.

Çамрăк мăшăр малтанах ашшĕ-амăшĕпе пысăках мар йывăç пӳртре пурăннă. 1960 çулта юрату çимĕçĕ – Николай – çут тĕнчене килет, çемьене савăнтарать. Çулталăкран Петровсем çĕнĕ пӳрт туса тĕп килтен уйрăлса тухаççĕ.

Пурнăç майĕпен малаллах шăвать. Ывăлĕ виççе çитсен кĕркунне ăна ашшĕ-амăшĕпе хăварса упăшкипе арăмĕ Сарă ту облаçĕнчи Ершов районне тухса каяççĕ, пĕр колхозра ĕнесем пăхса хĕл каçаççĕ. Çулталăкран таврăнаççĕ. Тепĕр тăхăр çул вырăнти колхозра вăй хураççĕ. 1973-1974 çулсенче Чул хула облаçĕнчи Спасск районне çул тытаççĕ. Яла килсен те Петровсем ĕççĕр лармаççĕ: Федор Иванович колхозри строительство объекчĕсенче вăй хурать, арăмĕ уй-хир бригадине çӳрет. Вырăсушкăнь ферминче те ĕçлеме тӳр килет вĕсен: хĕлле пăрусем пăхаççĕ, çулла ĕнесемпе уйра çӳреççĕ.

Сывлăхĕ хавшанипе 47-ри арçын çут тĕнчерен ытла та хăвăрт уйрăлса каять. Мария Егоровна ывăлĕпе кăна юлать. Пĕтĕм йывăрлăха, малашлăхри ĕç-пуça пĕрле сӳтсе явма тивет вĕсен. Пуça килнĕ шухăшсем канăç памаççĕ ăна: ывăлне хăвăртрах авлантармалла. Çамрăк кине çĕнĕ килçурта кĕртес килет.

Çирĕп шухăш-тĕллевлĕ хĕрарăм пурнăçра çухалса каймасть: халăх хушшинче ытларах пулать, общество ĕçĕсене пысăк хастарлăхпа хутшăнать. Ахальтен мар ăна профсоюз райкомĕн 9-мĕш конференци делегатне /1984/ тата хĕрарăмсен Совечĕн членне /1985/ суйлаççĕ. Çавăнпа пĕрлех çĕнĕ пӳрт лартма пулăшаççĕ.

Шухăшланă пекех, Мария Егоровнăн ывăлĕ 1990 çулхи çуркунне авланать. Яманкассинче çуралса ӳснĕ Валя Майорова комсомолка-çĕвĕç хаваспах унăн савнă мăшăрĕ пулса тăрать. Часах çĕнĕ çемьере йыш та хушăнма тытăнать.



● МАРИЯ ПЕТРОВА /СЫЛТĂМРИ/ ТАТА ОЛЬГА ПЕТРОВА.

...Чылай ватăлчĕ Мария Егоровна, çапах та сывлăх енчен аптрамасть. Кĕлетки малалла тайăлнă пулин те, вăл яланах – ура çинче, халăх хушшинче çӳрет: ватă çынсене вуланă произведенин кĕске содержанийĕпе тата хаçат-журналти интереслĕ статья-хыпарпа паллаштарать.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ,**
журналист-писатель.




САМАХ ПАРĂР-ХА

# Вĕсен умĕнче парăмра

Елена АТАМАНОВА

Шкулта вĕреннĕ чухне учительсене пĕр хутчен курнă хыççăн çав кун тепре тĕл пуласран тем пек шикленекенччĕ. Пĕр-пĕр вĕрентекен пирĕн еннелле утса килет тĕк – хапха алăкĕнчен вăшт кăна тарса çухалаканччĕ. Урамра е ăçта та пулин хирĕç пулсан вăтаннипе сăн-пит хĕрелетчĕ. Учитель киле килсен çĕр тĕпнех анса кайнă. Шикленнипе те мар, хисеплениpe пулĕ. Тата иккĕмĕш хут курсан мĕн чĕнмеллине пĕлместĕмĕр. Ирхине шкулта пĕрре сывлăх суннă пирки тепре сăмах хушма аванмарланнă. Сывăх та хаклă, иккĕмĕш атте-анне вырăнĕнчех пулнă вĕсем, пире вĕрентнĕ учительсем.

Чунне парсах тăрăшнă çав пирĕншĕн. Çĕнĕ темăна ăша лайăх хываймасан уроксем хыççăн класпах тытса юлса васкамасăр тепĕр хутчен ăнлантарнă. Математика учителĕ хăйĕн те ĕçĕ нумаййине, çемье пуррине пăхмасăрах задачăсем шутлама кану кунĕсенче килне чĕнетчĕ. Ĕлкĕрсе пырайманран мар, тата та тарăнрах вĕрентес тесе. Укçа, парне пирки сăмах та пулма пултарайман ун чухне. «Çак предмета тăшмана та суйласа илме сунмастăп», – тетчĕ тепĕр чухне тарăхнипе. Математикăна пурте лайăх пĕлеймен çав. Япăх паллăсемпе аран-аран сĕтĕрĕнсе пыраканни кашни класрах пулнă. Çапах та вĕсене никам та кăларса ярасшăн тăрăшман, малалла туртнă, хавхалантарса пынă.

Экскурсисемпе походсене илсе çӳретнине епле манăн тата. К.В.Иванов çуралнă тăрăхра, пирĕнтен чылай аякра пулнине пăхмасăрах, пĕр-икĕ хутчен те пулнă. Тăван тăрăхран 800 çухрăмра вырнаçнă Шупашкара та илсе кайнă. Çакнашкал çул çӳрев, паллах, тавра курăма анлăлатнă, хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхтарнă, тус-тантăш тупма пулăшнă. Сетьел тăвĕ çинче хĕле ăсатнисем, сăрт çинчи Юманлăх вăрманĕнче иртернĕ зарницăсем халĕ те куç умĕнче.

Пĕчĕккĕллех ĕçе вĕрентнĕ пире шкулта. Çавăншăн пысăк тав учительсене. 4-мĕш класранах урай çутарнă. Айван пулнă çав. Малтан пурăпа вараланнă доска умне, кайран тин партăсен айне тасатаканччĕ. Ирхине килнĕ çĕре урай шап-шурахчĕ. Класс ертӳçи ятлатчĕ паллах. Тĕрĕс тунă. Çапла майпа пĕчĕккĕллех тирпейлĕхе хăнăхтарнă.

Шкул çумĕнчи пахча калама çук пысăк пулнăран мĕн тĕрлĕ кăна çимĕç, улма-çырла ӳсместчĕ-ши унта? Йăлтах çавна ачасен, учительсемпе тирпейлӳçĕсен вăййĕпе пуçтарса кĕртнĕ. Çуллахи вăхăтра практикăна çӳренĕ. Шăварнă, çумланă, кăпкалатнă, хура хурлăхан, çĕр çырли, чие пуçтарнă. Купăста, хăяр-помидор тăварлассинчен те юлман. Авăн-юпа уйăхĕ ĕçленипех иртсе кайнă. Хирте сахăр кăшманĕ тасатнă, çĕр улми пуçтарнă. Çумăрлă кунсенче кăна сумка йăтса шкула кайнă. Хальхисемпе танлаштарсан лăпкăрах та пулнă вăл вăхăтри ачасем. 4-мĕш класран çĕçĕ йăтса кашни кун кăшман ани çине васканă. Хаçатпа чĕркенĕ те атă кунчине хĕстернĕ. Никам та никама амантман, касăлса та кайман.

Илемлĕччĕ вăл вăхăтри шкул. Ача нумай пулнипе çапла туйăннă-ши? Икшер сменăпа та вĕренетчĕç те. Малтан а, б, в класс таранахчĕ, кайран икĕ класс юлчĕ, каярах пĕр класс. Сисĕнмерĕ те, тахăш вăхăтра шкулта палăрмаллах ачасем тăрук чакрĕç. Кăçал вара ача çителĕксĕррипе 7-мĕш, 11-мĕш класс та çук. Треппелĕнче тем пысăкăш шкул пур çинчех 12 çухрăмри яла çӳреме тивет. Ку тăван тăрăхра – Пушкăрт Республикинче. Сахалтан та пĕр класра 7 ача пулмаллаçке. Унсăрăн класс хупăнать.

Ăнланмалла ĕнтĕ, шкулта ача çук тăк учительсем валли ăçтан сехет пултăр? Хăшĕ-пĕри сахаллипех çырлахать, çемьене пăрахса ăçта кайăн? Кӳршĕ яла çӳрекенсем те пур. Куншăн шкул директорĕ те, РУНО ĕçченĕсем те айăплă мар.

1990 çулсенче çамрăксем яла юлманнин, шкул пĕтерсенех хулана тухса вĕçтернин кăтартăвĕ ку. Колхоз арканчĕ, çамрăксем валли нимĕнле ĕç те юлмарĕ. Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм тăван кĕтесрен çак вăхăтра саланса пĕтрĕ те.

Ача усрава илес текенсем Чăваш Енри пек йышлах мар Пушкăртра. Ял шкулĕсене çапла майпа та сыхласа хăварма пулĕччĕ те. Çав вăхăтрах учительсен ĕç вырăнне çухатмĕччĕç. Кăçал Патăрьел тăрăхĕнчи Чăваш Ишекĕнче пулнăччĕ. Ыхрaçырми ялĕнче вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен Каролина Анатольевна Уткина чăннипех те хисепе тивĕçлĕ. Хăйĕн виçĕ ачине ура çине тăратнă хыççăн вăл тепĕр çичĕ арçын ачана усрава илнĕ. «Çемьере кăна ача йĕркеллĕ ситĕнме пултарать», – тет вăл. Лайăх та ырă амăшĕ вăл вĕсемшĕн. Çурт-йĕрне пăртак аслăлатса татах та тăлăхсене йышăнас шухăш-ĕмĕтлĕччĕ-ха Уткинсем. Яваплăхран хăрамасть ĕçчен хĕрарăм. Çемье пуçĕ те вăй-хăват парса тăрать ăна. Анатолий Арсентьевичпа Каролина Анатольевнăна таврара та хисеплеççĕ. Ун пек тĕслĕхсем республикăра татах та пур.

Ыран, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче – Учительсен кунĕ. Таврара чăн-чăн вăтă ăшши хуçаланать. Сап-сарă вĕрене çулçисем чăрсăр çил вĕрнипе çĕр çине вĕлкĕшсе ӳкнĕ, пăртак тăм тивнĕ хыççăн пахчара астрăсемпе георгинсем йăвашшăн çурăлса ларнă вăхăтра килет çак уяв. Эпир ача чухне, совет саманинче, ăна кĕркуннен иккĕмĕш уйăхĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче паллă тăваканччĕ. 1994 çулта улшăну кĕртрĕç. Халь ăна çулсерен юпан 5-мĕшĕнче уявлаççĕ.

Учительсен кунне паллă тума чи малтан АПШра, 1953 çулта тытăннă. 1944 çулта пĕр хĕрарăм Президент патне çыру янă. Вăл унта педагогсен вышкайсăр та пысăк ĕçне çӳллĕ шайра хакламалли пирки, вĕсене пулăшу памалли çинчен çырнă. Вунă çул иртсе кайсан тин учительсен уявне хăш кун паллă тăвассине палăртнă. Совет Союзĕнче учительсен кунне официаллă шайра çирĕплетнĕ хыççăн 1965 çулта çеç уявлама пуçланă.

Куç умне тăван килпе юнашарах вырнаçнă пысăк та хитре шкул çурчĕ тухать. Пире пĕлӳ панă вĕрентекенсем сахалăн юлнă пулин те кунта, пурпĕрех вăл хаклă. Çак шкулта вуламаçырма вĕреннĕ, пирĕншĕн пĕрремĕш тата юлашки шăнкăрав шăнкăртатнă. Пурнăçăн аслă çулĕ çине тухма пулăшнă педагогсен умĕнче эпир яланах парăмра. Çак илемлĕ уяв ячĕпе вĕсене чунтан саламлатпăр!

СПОРТ

# Зарядкăна – çĕкленӳллĕ кăмăлпа

Спорт форумĕччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Пĕтĕм Раççейри спорт форумне йĕркелесе иртерме Раççей Федерацийĕн тата вырăнти бюджетран укçа уйăрнисĕр пуçне спонсорсене те явăçтарасшăн. Шупашкарта «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумĕпе çыхăннă 100 ытла баннер çакнă. Çĕнĕ хула патĕнчи хыт хурана çулнă. Трактор тăвакансен проспектĕнчи çул-йĕре йĕркене кĕртсе ситернĕ.

Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ лапамра ирхи зарядка пулмалла. Вăл вунă сехетре пуçланĕ. Тăхăр сехетре унта хутшăнакансене шута илме тытăнĕç. Унта ватти-вĕтти те хутшăнĕ. Хĕрлĕ лапама секторсем çине пайлаççĕ. Пĕрлехи зарядкăна Раççейри тата Чăваш Енри паллă спортсменсем, форум хăнисем те хутшăнĕç. Ун хыççăн спорт парачĕ пуçланĕ. Кайран Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунĕ старт илĕ. Вун тăватă сехетре спорт бульварĕ ĕçлеме пуçлать.

Юпа уйăхĕн 5-7-мĕшĕсенче Хĕрлĕ лапамра зарядка иртерессипе тĕплĕ тренировкăсем тăвасшăн.

«Зарядкăра пурин те çĕкленӳллĕ кăмăл пулмалла. Чи кирли – çынсене интереслентересси, хавхалантарасси! Халĕччен спортран аякра пулнисем те сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансен ретне тăччăр», – тесе палăртнă хăйĕн шухăшне Республика Пуçлăхĕ «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвне хатĕрленсе иртерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче.

**Елена МИХАЙЛОВА.**

ПĔЛСЕ ТĂМА

# Черетлĕ «çĕнĕ» тренировка

Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ – Раççей граждан оборонин кунĕ. Кăçал вăл йĕркеленнĕренпе 82 çул çитет. Çавна май çак кун çĕр-шывĕпех масштаблă тренировкăсем иртĕç. Вĕсен тĕп тĕллевĕ – вăл е ку вырăнта пысăк инкек сиксе тухас пулсан хамăра мĕнле тытмаллине вĕрентесси. Чрезвычайлă лару-тăру министерствинче, тĕрлĕ ытти тытăмра ĕçлекенсем те хăйсен пултарулăхне, пĕлĕвне практикăра тĕрĕслеме, çирĕплетме пултарĕç.

Кун пек вĕренӳ пĕрремĕш хутчен иртмест ĕнтĕ. Унашкаллисене тăтăшах йĕркелеççĕ. Халиччен халăха васкавлăн систерес тесе электричество сиренисемпе усă курнă пулсан ку хутĕнче вĕсем янăрамĕç.

Ытти тренировкăпа танлаштарсан паян йĕркеленĕскерĕн тĕпĕр уйрăмлăх та пур. Халĕччен вăрçă вăхăчĕ сиксе тухсан мĕнле ĕç-пуç туса иртермелине пăхса тухнă тăк, хальхинче кашни муниципалитет пĕр-пĕр инкек шухăшласа кăларать те ăна хăвăртрах сирме тăрăшать. Палăртнă тăрăх чи пысăк чрезвычайлă лару-тăру Çĕнĕ Шупашкарти ГЭСра «пулмалла». Ăна сирме ятарлă аэромобильлĕ ушкăна явăçтараççĕ.

Ун пирки тĕплĕнрех калас пулсан, вăл та МЧС тытăмĕнчи çĕнĕлĕх. Ăна çулталăк пуçламăшĕнче йĕркеленĕ. Маттур та пултаруллă 65 çын тата тĕрлĕ 12 техника çав йышра. Раççейĕн хăть хăш регионĕнче пĕр-пĕр пысăк инкек сиксе тухсан çак ушкăн çийĕнчех вĕçсе туха кайма хатĕр.

Кун пек ушкăн йĕркелес ыйту пĕлтĕр Инçет Хĕвел тухăçне шыв илнĕ хыççăн сиксе тухнă. Çавăнпах ГЭСри улталă инкек вĕсемшĕн хăйне евĕр пĕрремĕш тĕрĕслев пулĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ÇУЛ ÇИТМЕННИСЕМ

# Ашшĕ-амăшĕн тимлĕ пулмалла

Авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче Етĕрне çулĕ çинче ВАЗ-21074 автомашина сылтăмалла пăраннă май мопеда çул паман. Çавна май икĕ транспорт çапăннă. Мопед рульне тытса пынă 14 çулти яш урине хуçнă. Унпа юнашар ларакан улттăмĕш класс ачи пуçне амантнă. Тухтăрсем пулăшу кӳнĕ хыççăн иккĕшне те килне янă.

Автомашина хуçи çул çинчи мопеда асăрхаман имĕш. ÇÇХПИ инспекторĕсем айăплине административлă штраф панисĕр пуçне çамрăк водитель ашшĕ-амăшĕпе тĕл пуласшăн, шкула çитсе профилактика тĕлĕшĕпе калаçу иртересшĕн.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

ÇИТĔНӲ

# Лайăх шкул сахал мар

Раççейре чи лайăх 500 шкула палăртнă. Вĕсен йышне республикăри 6 шкул кĕме тивĕçнĕ. Списока 2013-2014 вĕренӳ çулĕн кăтартăвĕсене – ППЭ, предмет олимпиадисен пĕтĕмлетĕвĕсене – шута илсе хатĕрленĕ. Шупашкарти 3-мĕш лицей, 5-мĕш гимнази, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш гимнази, 4-мĕш лицей, 4-мĕш гимнази, Шупашкарти 1-мĕш гимнази асăннă йĕркепе 485, 486, 487, 488, 489, 490-мĕш вырăнсене тухнă.

Предмет олимпиадисен пĕтĕмлетĕвĕсене тишкерсе ачасен пултарулăхне аталантарма пулăшакан 200 вĕренӳ заведенине те палăртнă. Вĕсен йышне Шупашкарти 3-мĕшпе 5-мĕш лицейсем, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш гимнази кĕнĕ.

Çавăн пекех Чăваш Енри ялсенче те лайăх шкул сахал мар. Çакна Раççейри ялсенчи чи лайăх 200 шкул шутне Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ шкул, Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул, Патăрьелĕнчи 1-мĕш вăтам шкул, Вăрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ вăтам шкулпа Вăрнарти 2-мĕш вăтам шкул кĕни çирĕплетет.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

ХАСТАРРИСЕМ

# Сывлăх сунса кĕтсе илчĕ тухтăр



Çĕрпÿ районĕнчи Кăнар ялĕ çÿ-ÿ-ÿлĕ вырăнта вырнаçнă. Ĕлĕкрех çакăнтан пысăк лавсем иртсе кайнă теççĕ. Сутă тăвакансем хăпарса çитсен тин сывлăш çавăрса илме чарăннă. "Канар..." – пурте илтмелле кăшкăрнă малтисем.

Унта çиелтех мар, 130-150 метр тарăнăшĕнче, шыв юхса выртать. Çавăнпах пусă чавакан сайра. Йĕри-тавра – вăрман. Ÿркенменнисем майăр пуçтарса пĕтернĕ, кăмпа татаççĕ.

Ĕмĕрĕпех сывлăх сыхлавĕнче тăрăшнă Виталий Гурьевпа паллашма тÿр килчĕ. Ăна çак тăрăхри çынсем уйрăмах лайăх пĕлеççĕ. Вăл тĕп тухтăрта 36 çул ĕçленĕ. Хăй калană тăрăх – ял-йыш çаплипех сĕнÿ-канаш ыйтать. "Ĕçленĕ вăхăтра та ман пирки республика хаçатĕнче çырман. Халĕ мĕнпе тивĕçлĕ пултăм-ши?" – кĕтсе илчĕ вăл журналистсене.

Виталий Денисович – йывăрлăхран хăраман çын. Пуçланă пур ĕçе те вĕçне çитерет вăл.

Хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхас тесех шкул хыççăн Ивановăна тухса кайнă. Тĕрĕссипе, сывăхри хулара та пĕлĕвне тарăнлатма пултарнă Вăрмар районĕнчи Мăнçырма каччи. Студент чухне ытти çамрăкпа пĕрле çĕнĕ çĕрсем уçнă, çĕр улми пуçтарнă.

"Мана ĕçе çĕнĕрен пуçламалли вырăна ярăр", – хăйне тĕрĕслесе пăхас килнĕ Виталий Гурьевăн.

Кăнарта çĕнĕ больница хута ярас ыйтăва Чулхулара, Мускаврa çĕкленĕ вăл. 9 çул хушшинче ăçта кăна çитмен-ши, кампа кăна калаçман-ши çамрăк тухтăр? Çапах шухăшланине пурнăçа кĕртме вăй çитернех.

1986 çулта тинех больница çуртне хăпартса лартнă. Пÿлĕмсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтернĕ. Тухтăрсен йышĕ палăрмаллах пысăкланнă. Унсăр пуçне йĕри-тавра 150 пион, 100 улмуççи лартнă. Çимĕçе те вăхăтра вырнаçтарма тăрăшнă.

Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ вăхăта мĕнешкел хавхаланса аса илет Виталий Денисович. Чирлĕ мĕн чухлĕ çын куç умĕнчех сывални кирек кама та хăпартлантарĕ. Паян больница малтанхи хăватпа ĕçлемест. Çапах çынсен кăнтăрлахи стационарта сипленме май пур.

Виталий Гурьев пушă вăхăт тупăнсанах йывăçран тĕрлĕ япала ăсталать. Хĕвел майлă ывăс касса кăларать. Унăн табуречĕ те эрешлĕ. Çак хатĕрсене тăванĕсене парнелет вăл.

Кил таврашне мăшăрĕпе, ачисемпе пĕрле хăтлăлатнă. Ĕçлеме – сĕтел те, ларса канма сак та пур.

Кĕтсе илнĕ чухне те, ăсатма тухсан та сывлăх сунчĕ пире Виталий Гурьев.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

ШĂПА

# «Ашшĕ çуккине ан сисчĕр ачамсем»

95 çулти Наçтук аппа çулне пăхмасăр маттур та тараватиккенне ял-йыш та, хĕрĕпе кĕрÿшĕ те палăртаççĕ. Пĕлтĕрхи çулла çеç-ха вăл кунĕ-кунĕпе пахчара аппаланнă, утă çулнă, кăшманпа çĕр улми кăларнă, вылăх пăхнă. Пĕрре те алă усса ларман. Кăçал çеç ури ыратнипе асапланма пуçланă. Çавна пулах ытлашши тухса çÿреймест. Кунăн Анастасия Ивановна хăй те питĕ кулянать.

– Пыл сăрине мĕн тери тутлă вĕретет вăл. Унăн хăйĕн ятарлă рецепт. Кÿршĕ-аршăри мĕн пур туй-хăна валли хатĕрлетчĕ ăна, – тет хĕрĕ Муза.

Нумай хура-шурне курма тивнĕ Етĕрне районĕнчи Тури Ирçере тĕпленнĕ Наçтук аппан. Вăл ÿсĕмри чылай çын пекех выçăллă-туталлă, тертлĕ-нушаллă пурнăçа мĕн ачаранах ас тивме тытăннă. Ашшĕ Иван Федорович икĕ вăрçăра та пулнă. Шăпах кил хуçи килĕнчен вутçулăм айне пĕрремĕш хутчен тухса кайсанах çуралнă та Анастасия Потапова. Граждан вăрçинче пулнă салтак тăванĕсенчен иккĕмĕш хутчен усал хыпар тухсанах уйрăлнă. Çапла вăл хаяр вăрçă пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен фронтра пулнă.

Кил хуçи çеç мар, ачисем те салтак атти тăхăннă. Ывăлĕ Гурий те малтанхи çапăçусене хутшăннă. Аманса таврăннă вăл. Дояркăра ĕçлекен Анастасия вара Сăр хĕррине окоп чавма кайнă, вăрман каснă.

– Сивĕччĕ, питсем шуралсах каятчĕç. Лумпа шăннă çĕре таккаса алăсем туйми пулатчĕç. Ал лапписем тăм илнипе çурăлса-юнăхса тăратчĕç, – иртнине ассăн сывласа аса илет Наçтук аппа. – Пĕр киле хваттере нумай çынна янăччĕ. Выртма та вырăн çукчĕ. Кашни кун çăвăнайман. Уйăхĕ-уйăхĕпе пĕр тумпа çÿресе хăшĕ-пĕри кĕсенленсех каятчĕ. Пыйтланакансем те нумайăнччĕ, – аса илÿ çăмхине малалла тăсать ватă.

Мирлĕ пурнăçпа пурăнма тытăнсан 1949 çулта Анастасия Ивановна Михаил Михайловича качча тухать. Упăшки те вăрçă витĕр тухнăскер. 1943 çулта Волховра плена лекнĕ вăл. Икĕ çул çапла нимĕç салтакĕсен аллинче пулнă. 1945 çулта тин Витенбург хулинче американ çарĕсем вĕсене ирĕке кăларaççĕ.

31-ри Наçтукпа 36-ри Михаля пĕр шухăшлă пулса çемье чăмăртаççĕ. Икĕ çултан вĕсен Зоя çуралать. Тата икĕ çул иртсен çут тĕнчене Марк килет. Анчах арçын ача нумай пурăнаймасть. Шăнса пăсăлнине пула иккĕ тултарсан вилет.

– Хамах вĕлертĕм ăна. Эпир таврăнасса чÿрече çине хăпарса ларса кĕтетчĕ. Шăннă та ĕнтĕ пĕчĕкскер. Чирленине сиссен те больницăна тÿрех каймарăмăр. Ялан ĕçленĕ вĕт – пушă вăхăт пулман. Шала кайнă чире кайран тухтăрсем те иртterеймерĕç, – куççулĕ витĕр аса илмелли сахал мар кинемейĕн.

1958 çулта Муза çуралать. Хĕрĕсем ÿснине пăхса савăнса пурăнас чухне кĕçĕнни виçĕ уйăха çитсен кил хуçи çĕре кĕрет. Çапла Наçтук аппа икĕ хĕрне пĕччененех ура çине тăратать.



– «Ачамсем ашшĕ çуккине ан сисчĕр тесе кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ», – тетчĕ каярах анне хăнасем килсен, – темле вăртăнлăх уçнăн сăмахлать Муза Михайловна. – Пире вăл нихăçан та выçă усраман. Апла пулин те килте арçын çукки сисĕнмен мар.

Пурнăç тăршшĕпех мĕн ачаран колхозра тăрăшнă Анастасия Ивановна. Ĕне сунă, пăру пăхнă. Каярах котельнăйĕнче вылăх валли апат пĕçернĕ.

– Ĕне сăвакансем çитиччен ĕлкĕрес тесе çур çĕр иртни иккĕрех тухса каяттăм, – каласа кăтартать вăл.

Паян Анастасия Ивановнăн тăватă мăнук, вĕсен пилĕк ачи çитĕнет. Кĕçĕн хĕрĕн çемйипе кун кунлать вăл. Сăмах май, Муза Пушкăрт каччипе Николай Петровичпа çемье çавăрсан та тĕп килĕнчен тухса кайман.

– Яланах килĕштерсе пурăннă эпир, халĕ те пĕр чĕлхе çăмăллăнах тупатпăр. Манăн хуняма – ылтăн, – тет Николай Петрович мăшăрĕн амăшĕ çинчен ырăпа çеç асăнса.

– Ачасене виçĕ уйăхрах аннепе пăрахса хăвараттăм, хам ĕçе тухса каяттăм, – систерет хĕрĕ. – Килте шанчăклă çын пуррине пĕлни хăех мĕне тăрать, – хăпартланать унăн кăмăлĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

ÇЫРĂНТАРУ

# Çĕвĕç йĕп вĕçĕпех çурт лартать



Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

Етĕрне районĕнчи Пушкăрт ялĕнче çĕвĕ ĕçне пĕлекен хĕрарăмсем пурăнаççĕ. Малтан, "Работница" фабрикăн филиалĕ ĕçленĕ вăхăтра, çакăнта 2-3 сменăпа япала çĕленĕ. Ун чухне çывăхри ялсенчи хĕрарăмсене те ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ.

Самана улшăннă вăхăтра çĕвĕ мастерскойĕ хупăннă. Унтан каллех çĕнĕ вăйпа ĕçлесе кайнă вăл.

"Уй, мĕн чухлĕ хыпар пĕлмесĕр юлнă эпир..." – терĕç кăçал "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçат çырăнмасăр юлнă çĕвĕçсем. Пĕлĕшĕсем пирки пичетленĕ статьясене сасăпах вулама пуçларĕç. Çитес çул вĕсен килне те "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçат пырса тăрĕ.

Халĕ çакăнта, Етĕрнери промкомбинатăн филиалĕнче, 12 хĕрарăм ĕçлет. Вĕсенчен ытларахăшĕ – тивĕçлĕ канура. Тĕркитĕркипе фуфайка, куртка çĕлесе хунă вĕсем. Хĕрарăмсен алли витĕр тухнă çипуça сывлăх сыхлавçисем, газовиксем, салтаксем, нефть кăларакансем... тăхăнаççĕ.

"Саккаса вăхăтра пурнăçлас тесе касçи сăвăм хыççăн та ĕçе килме хатĕр эпир", – хăпартланса калаçаççĕ Пушкăртсем.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

АСА ИЛӲ

# Вăрăм ĕмĕрлĕ Валентина Элпи

**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентина Элпи /Валентина Андреевна Андреева/ çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ. 1913 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Кивĕ Пуянкасси ялĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă вăл. Малтан хăйсен ялĕнчи пуçламăш, унтан Вăрмар районĕнчи Кавалти сакăр çул вĕренмелли шкулта пĕлӳ илнĕ. 1930 çулта Шупашкарти медицина техникумне вĕренме кĕнĕ, анчах диплом илме май килмен. Куславккари район хаçатĕнче, "Канаш" /хальхи "Хыпар"/ хаçатра, радиора вăй хунă вăл. Малтанхи калав-повеçĕ республика хаçат-журналĕнче 1946 çулта пичетленме пуçланă. Çыравçă хăйĕн ĕçĕн пысăк пайне ачасене халалланă. Вăл – 20 ытла кĕнеке авторĕ. "Куçса çӳрекен çурт", "Вун тăваттă тултарас умĕн", "Эп халь телейлĕ", "Аппапа пĕрле", "Тăрăр вăйă картине", "Чĕнтĕрлĕ кĕпер", "Пулас кинсем", "Качча кайсан", "Малтанхи савни", "Юратнă мăшăрсăр"... ĕçĕсене вулакан лайăх пĕлет. Унăн ĕçĕсем "Çулталăкри чи вуланакан кĕнеке" республика конкурсĕсенче çĕнтернĕ.**

### *Пушă алăпа çӳремен*

101 çула çитме пӳрнĕ ăна. Унăн йăл кулли çаплипех куç умĕнче. 100 çулхи юбилейне мĕнешкел сумлă паллă турăмăр. Унăн пур тăванĕ те пуçтарăнчĕ. Çавнашкалах влаç çыннисем, ĕçтешĕсем, пултарулăхне сума сăвакансем саламларĕç ăна. Тăрантаспа ярăнтарма палăртса хунăччĕ, анчах сивĕ çанталăка пула çыравçăн тăванĕсем хирĕçлерĕç.

Унччен маларах Валентина Элпи хăнана чĕннĕччĕ. Çак тĕл пулу саманчĕсене аса илтерес килет. Сăмах май, вăл икĕ хут мăшăрланнă. Упăшкисенчен пĕри – "Сĕве Атăла юхса кĕрет" роман авторĕ Куçма Турхан. Анчах хĕрарăм 2 хĕрне пĕччене çитĕнтернĕ. Асли Дина Шупашкартах пурăнать, кĕçĕнни Аза Польшăра тĕпленнĕ.

"Валентина Андреевна, ас тăватăр-и, пĕрре ĕçпе телефонпа çыхăннăччĕ. Хĕрĕр Варшавăран тĕрлĕ кучченеç, çав шутра нумай канфет илсе килнине палăртнăччĕ", – аса илтертĕм. "Амăшĕ патне пушă алăпа кам каять?" – терĕ вăл.

Сăн ӳкерчĕксен альбомне уçса пынă майăн хут листи тухса ӳкрĕ. Унта шăпах "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçата сĕнме палăртнă калавсен ячĕсене çырни асран тухмасть. Çакă та çыравçă пирĕн кăларăма хисепленине кăтартнă вĕт.

### *Асапĕ те, савăнăçĕ те юнашарах*

Хамăрăн калаçăвăн пĕр пайне илсе кăтартатăп.

**– Валентина Андреевна, вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши?**



● 100 ÇУЛХИ ЮБИЛЕЙРА.

– Çынпа вăрçăнса курман. Урама тухсан та яланах халăх хушшинче эпĕ. Арçынсем пĕрре тавлашура çĕнтернĕ ятпа туя та туса панăччĕ мана. Кӳршĕсемпе урлă-пирлĕ пулман. Арçынсемпе те, хĕрарăмсемпе те туслă пурăнма тăрăшнă. Ĕçре те, радиора та нумай çынпа хутшăннă.

**– Мĕн вăл телей? Хăвăра телейлĕ туятăр-и?**

– Ĕç ăнса пырсан çын телейлĕ. Хам пирки вара нихăçан та шухăшламан. Халь пулсан пĕр сăмах та çыраяс çук. Вăхăтĕнче тăрăшнă. Çынсемпе туслă пурăнни хăват хушнă-тăр. Ыт ахальтен ларса çырма çук-çке. Этем шăпи чĕрене кĕрсе вырнаçмалла. Çынсемпе калаçнă хыççăн пуçа темĕнле шухăш та пырса кĕнĕ ахăр.

**– Сăнарсем тĕлĕкре килни пулман-и?**

– Канлĕ пурăнсан темĕн те пĕр тĕлленет. Ывăнсан выртсанах ыйхă килет. Темĕн те пĕр тĕлленнĕ ахăр, анчах тĕлĕк хыççăн кайман.

**– Тĕшмĕше ĕненетĕр-и?**

– Çук. Вăхăт та пулман тĕшмĕше ĕненсе ларма. Ачасем Мускаврa вĕреннĕ. Манăн ĕçлесе вĕсене укçа ярса памалла пулнă. Институтра вĕренекенскерсене çынран кая тумлантарман.

**– Пурнăçра чи йывăр тата чи савăнăçлă самантсене ас тăватăр-и?**

– Вăрçă вăхăтĕнче выçă пурăннă. Карточкăпа çăкăр илме çĕрĕпех вăрăм черетре тăнă. Хĕлле шăнса кӳтсен ăна тӳрех çиме те хапăлччĕ, анчах хырăма астарма юраман. Карточка çухатсан выçăпа аптăракан та пулнă. Пĕр уйăхлăх панă вĕт çав хутсене... Хурлăхлă саманта илсе кĕтĕм. Сирĕн çавнашкал йывăр пурнăç курмалла ан пултăр.

Кĕнеке тухнăшăн савăннă. Вăл ĕçе кăтартса парать-çке. Каçхине, кăнтăрла, канмалли кунсенче кăмăл туртнипе çырнă ăна. Ĕçе халăх йышăннă.

**– Çутă ĕмĕт пурнăçланнă-и?**

– Интереслĕ сюжетсем ширанă. Пурнăç вĕрентсе пынă. Кăсăклă кĕнеке кăларса вулакансене, юлташсене савăнтарма тăрăшнă. Ялтан хулана килнĕ, аталанма ăнтăлнă, лайăххи патне туртăннă.

**– Чăн хĕрарăм темисене суйланă. Малтанхи савни, пепке, кинсем пирки, качча кайсан...**

– Çапла каласан чĕре йăшт! турĕ. Хамăн пурнăçа та кăтартнă ĕнтĕ ĕçсенче. Çапах та çакă çителĕксĕр. Сăнарăн шăпине уçмашкăн çынсен кун-çулне тишкермелле. Хамăн кăмăла лăплантарма кăкарса лартнă евĕр вырăнтан тапранмасăр ĕçленĕ ĕнтĕ. Асапĕ те, савăнăçĕ те пĕрлех. Çырма, шухăша аталантарма пĕрре те çăмăл мар.

**– Аçăр-аннĕре аса илсемĕр.**

– Атте аслă ачасен çумĕнчеччĕ. Чăннипе, хĕрĕн амăшĕпе юнашар пулмалла пек, анчах унăн аркинчен кĕçĕннисем Аркадипе Миша уртăнатчĕç. Пур пĕрех пĕчĕккисене утьăкка сиктерме те, пысăкраххисене пуçран ачашлама та май тупатчĕ. Пĕрмай "атте" тенĕрен анне кăмăлсăрланасран та пăшăрханнă. Кил хуçи ĕçченччĕ. Пĕвесем пĕвеленĕ. Кĕпер хывма та хутшăннă. Шел, часах çĕре кĕчĕ.

Аннене тăхăнтартма юрататтăм. Тутăрне хам çыхтарнă, кĕпине çĕлесе панă. Çакăншăн мухтанатăп та.

Чăваш хăнасене хапăлласа кĕтсе илет. Валентина Андреевна сивĕтмĕшрен апат-çимĕç кăларса лартрĕ. Пире килти пек туйма сĕнчĕ. "Паян эсир мар, эпĕ хăна пулам", – пĕлĕм пĕçерме ыйтса сăмахларĕ çыравçă. Кайран унпа пĕрле чей ĕçрĕмĕр...

Чуна уçса калаçнăшăн, ырă суннăшăн, лайăх пурăнма пехил парса хăварнăшăн тавах. Лăпкă çывăр, Валентина Андреевна.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Юмахринчен кая мар



Çĕрпӳ тăрăхĕнчи Кăнарта пулнă май ача сачĕн картишне кĕрсе тухмасăр чăтаймарăм. Тĕрлĕ чечек лартса илемлетнĕ çурт таврашне. Хурăнсем çине шурă аистсем йăва çавăрнă. Кăнтăртан вĕçсе килнĕ шупка хĕрлĕ фламингосем катаранах курăнса тăраççĕ. Чăн та, чĕррисенех аса илтереççĕ. Вĕсене воспитательсем пластик кĕленчесемпе çӳп-çап çатăркисенчен хатĕрленĕ. Кӳлнĕ ашаксен çуни çинче темĕн тĕрлĕ чечек ешерет. Тĕмсен хушшинче мулкач кишĕр кăшласа ларать, упа çури чĕресрен пыл çиет.

– Вăрах вăхăт ларма тиврĕ, кайăксем валли питĕ нумай çатăрка кайрĕ, – тет хуçалăх заведующийĕ Надежда Геннадьевна. Тирпейлĕ те хăтлă пулнипе иртнĕ çул «Хунав» районта виççĕмĕш вырăн йышăннă.

– Халь тем те пĕр ăсталанипе никама та тĕлĕнтереймĕн. Интернетра йăлтах вĕрентеççĕ, – теме васкĕ хăшĕ-пĕри. Ӳркенменни, ырă ĕç валли вăхăт тупни, ачасене хăтлă кĕтес туса пама пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чи пĕчĕккисен урама тухсан вылямалли кĕтесĕпе паллаштарма васкарĕç пире садик ĕçченĕсем. Кунтах çуллахи веранда. Çу кунĕсенче хăйăр купи çинче вылякан ачасен пуçне шăрăх тивесрен те хăрушă мар. Ун тăрринче хитре пысăк чечек. Çакăнтах симĕс пальма илем кӳрсе ларать. Чуччусăр мĕнле тата? Ăна та çĕнĕ йышшине, тайăнса лармаллине çакса панă.

Пысăках мар çĕр лаптăкĕ çинче кишĕр, кăшман, купăста туса илеççĕ. Ачасене паллаштарас тесех лартаççĕ пахча çимĕçе. Иртнĕ çул ача садне спонсорла пулăшу паракан та тупăннă. Унпа çемçе сĕтел-пукан туяннă.

«Хунав» ача садне таврари пилĕкултă ялтан 50 ача çӳрет. Пĕтĕмпе 5 воспитатель тăрăшать. Галина Сергеева чунтан парăннă çак ĕçе. Вăл Шупашкарти педагогика училищинчен тӳрех çакăнта килнĕ. 30 çула яхăн тăрăшать вăл. Шăпăрлансене тĕрлĕ енлĕ аталантарасшăн.

«Хунавра» ачасем хăйсене лăпкă та лайăх туяççĕ. Кунта ĕçлекенсем те вĕсене мĕн пур чун ăшшине, юратăвĕпе çепĕçлĕхне парнелеççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.





АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Шур çырлипе лимон кукăлĕ



**Чуста валли: 200 грамм маргарин, 200 грамм хăйма, 3 çăмарта сарри, 1 стакан сахăр, 2,5 стакан çăнăх, çур чей кашăкĕ апат соди; ăшне хума: 1 стакан шур çырли, 1 лимон, 1,5 стакан сахăр, 3 çăмарта шурри кирлĕ.**

Çимĕçсене хутăштарса чуста çăрмалла. Ăна тип çу сĕрнĕ çатмана тикĕслесе сармалла та 200 градуса çити хĕртнĕ духовкăра хĕреличчен пĕçермелле. Шур çырлипе лимона аш арманĕ витĕр кăларса 1 стакан сахăрпа пăтратмалла. Ытти сахăрпа çăмарта шуррине кăпăкланиччен лăкамалла. Пиçнĕ чуста çине кукăль ăшне link сармалла, çиелтен çăмарта шурри сĕрмелле. Кукăле 110 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 15-20 минут тытмалла.

### Рагу

**Тăрăхла 2 кавăн, 1 кишĕр, 1 пуç сухан, 1 помидор, 1 чей кашăкĕ кетчуп, тип çу, тăвар кирлĕ.**

Сухана вĕтетмелле те хитре тĕслĕ пуличчен тип çура ăшаламалла. Кишĕре шултăран теркăласа суханпа пĕрле ăшаламалла. Помидора турамалла, çимĕçсем ăшаланакан çатмана хушмалла, çулăма сÿнтермелле, хупăпа витмелле. Тăрăхла кавăна хуппипе вăрринчен тасатмалла, тăваткаласа турамалла. Çимĕçе çатмана хумалла, кăштах шыв ямалла, тăварпа кетчуп хушмалла. Пăтратмалла та хупăпа витсе 20 минут пăшăхламалла.

### Çĕр улмипе какай

**1 килограмм çĕр улми, 500-700 грамм какай фаршĕ, 1 сухан, 2-шер апат кашăкĕ хăймапа майонез, тăвар, вĕтетнĕ хура пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Сухана вĕтĕ теркăпа хырмалла, фаршпа пăтратмалла, тăвар, пăрăç ямалла. Шуратнă çĕр улмине çавракан 5 миллиметр хулăнăш касмалла, тăвар сапмалла, майонезпа тата хăймапа пăтратмалла. Формăна тип çупа сĕрмелле, çĕр улми хумалла. Унтан фарша вырнаçтармалла, çиелтен – каллех çĕр улми. Запеканкăна 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна 40-50 минутлăха лартмалла.

### Кавăн кукăлĕ

**Çур килограмм хăпарнă чуста, 1 çăмарта сарри, тип çу; ăшне хума: çур килограмм тасатнă кавăн, 2 апат кашăкĕ услам çу, çур стакан сахăр кирлĕ.**

Кавăна турамалла, услам çу хĕртнĕ çатмана ямалла. 1/3 стакан шыв, сахăр хушмалла та пĕчĕк çулăм çинче çур сехет пăшăхламалла. Кавăна тÿмелле. Чустан пĕчĕк пайне кукăле илемлетме татса юлмалла, ыттине тип çу сĕрнĕ çатмана сарса хумалла. Çиелтен кавăна вырнаçтармалла. Хăварнă чустаран решетке ăсталамалла. Кукăль питне лăканă çăмарта сарри сĕрмелле. 180 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 30-35 минут пĕçермелле.

### Шарлотка

**200 грамм сахăр, 5 çăмарта, 200 грамм çăнăх, çур килограмм пан улми кирлĕ.**

Çăмартапа сахăра 5-7 минут лăкамалла, çăнăх хушмалла. Пан улмине шуратмалла, варрине тасатса турамсене уйăрмалла. Çатмана тип çу сĕрмелле те чустан 1/3 пайне сармалла. Ун çине пан улмин çуррине вырнаçтармалла. Çимĕçе кăштах корица сапсан юрать. Унтан каллех чуста – пан улми – чуста сармалла. Апата 100 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 40-60 минут пĕçермелле.

### Мăйăр печенийĕ

**200 грамм услам çу, 100 грамм сахăр, 1 чей кашăкĕ ванилин, 2 çăмарта сарри, 1/4 чей кашăкĕ тăвар, 300-350 грамм çăнăх, çăра повидло кирлĕ.**

Çăва сахăрпа тата ванилинпа çемçеличчен пăтратмалла. Çăмарта сарри хушмалла. Çăнăх ярса чуста çăрмалла. Ăна аçтăрхан мăйăрĕ пысăкăш татăксене уйăрмалла, çаврашка туса çатмана вырнаçтармалла. Кашнин варрине пуç пÿрнипе шăтăк тумалла. Апата 180 градуса çити хĕртнĕ духовкăра 10 минут пĕçермелле. Шăтăксене повидло хумалла. Печенисене духовкăра тата 15 минута яхăн тытмалла.

### Кавăн икерчи

**1 вăтам кавăн, 200 грамм çăнăх, 1/2 литр сĕт, 2 çăмарта, 1 апат кашăкĕ тип çу, 200 грамм сахăр, çĕпре, тăвар кирлĕ.**

Кавăна тасатмалла, пĕçермелле, нимĕр хатĕрлемелле. Хыççăн ăшăтнă сĕт, çăмарта, çăнăх, çĕпре хушмалла. Лайăх пăтратмалла та 1-2 сехетлĕхе ăшă çĕре лартмалла. Чуста хăпарсан икерчĕсем пĕçермелле.

ЧĂРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Йĕплĕ чечек

Кактуссен тăван çĕр-шывĕ – Çурçĕр тата Кăнтăр Америка. Вĕсене Европăна 18-мĕш ĕмĕрте илсе килнĕ. Паллă тĕпчевçĕ Карл Линней çак ÿсен-тăрана вăл авалхи Грецири йĕплĕ чечеке – кактоса – аса илтернĕрен, кактус ят pană.



Ÿсен-тăран питĕ чăтăмлă. Ятарласа пăхмасан та чиперех ÿсет. Çапах хĕвел çутишĕн тата уçă сывлăшăн антăхать.

Кактуссем çĕр çинче 10 миллион çул каяллах пулнă. Вĕсенчен апат-çимĕç, эмел хатĕрленĕ, строительство материалĕ вырăнне усă курнă. Мексикăра ăна халĕ те çиеççĕ.

Кактус çеçкине курас тесен çакнашкал сортсем туянăр. Сăмахран, нотокактус, маммилярия, эхинопсис, хамецереус чечек çуракан сортсем шутланаççĕ. Опунци, цереус ытлах савăнтармасть. Кактус 3-4 çулта пĕрре çеç чечеке ларать.

Хĕлле кактуссене сутă кирлĕ тата температура 5-15 градус пулсан аван. Час-часах шăвармалла мар.

Çуркунне ку чечек хăвăрт типет. Ăшăрах вырăна куçарса лартни те пăсмĕ. Кактуссем тăвар чÿлмекре çеç чечеке лараççĕ.

АСРА ТЫТМА

# Кофе витĕмĕ

Тĕнчери халăхăн çур пайĕ куна кофе ĕçнинчен пуçлать. Кофеин нерв тытăмне витĕм кÿнине пула анлă сарăлнă çак шĕвек. Унăн виçи организмшăн пĕлтерĕшлĕ-и? 10 грамм кофеин, сăмахран, çынна вĕлерме пултарать. Вăл 5 литр çăра кофепе е 4 сехетре ĕçнĕ 100 курка экспрессопа танлашать.

Çапах та çак шĕвеке мĕн чухлĕ ĕçме юрать-ха? Специалистсен шухăшĕпе, ку виçе кашни çыншăн тĕрлĕрен. Малтанхи çур кунра ĕçнĕ 1-2 курка кофе сывлăхлă çыншăн сиенлĕ мар.

Кофе серотонин /лайăх кăмăл гормонĕ/ виçине йĕркелет. Çавăнпах çак шĕвек депрессие çĕнтерме пулăшать. Анчах виçеллĕ ĕçмеллине манмалла мар.

Ирхи апат хыççăнхи пĕр курка кофе ĕç хăватне 10 процент пысăклатать. Выç хырăмла ĕçни вара ĕçлес килнине пусарать. Кофере $B_5$ тата Р витаминсем пур.

Пуç ыратнине ирттерекен эмелре те кофеин пур. Çавăнпах çак шĕвек витĕмне нумайăшĕ туйнă ахăр. 4-5 курка кофе вара, кофеин юн тымарĕсене пĕрнине пула, пуça ыраттарать.

СЫВЛĂХ

# Гемоглобин шайне ÿстерме



Ку чиртен катăркас пулăшать. Унăн настойне хатĕрлеме 500 грамм чечекне 600 миллилитр вĕренĕ шыва ямалла, çур сехет лартмалла. Кунне виçĕ хутчен 200-шер миллилитр ĕçмелле.

Шыв вĕретме 100 грамм çырлана тÿсе çур литр шыва ярса çур сехет вĕретмелле. Шыва кунне виçĕ хутчен 50-100-шер миллилитр ĕçмелле. Ку çырлана çиме юратакансен вăл юн пусăмне чакарнине шута илме манмалла мар.

# Шăнса пăсăлнинчен – шур çырли

Ытларах чухне унран морс хатĕрлеççĕ. Тĕрлĕ витамин /уйрăмах Р тата С/ нумайран тата бактерисемпе кĕрешме пултарнăран вăл чăннипех те усăллă. Анчах пысăк температура витĕм кÿрсен нумай япала пахалăхĕ чакать. Çавăнпах çырлана вĕретме сĕнмеççĕ. Ăна чĕрĕлле тÿсе вĕренĕ шывпа хутăштарсан чылай усăллăрах. Пылаклатма пыл хушмалла. Сунас асаплантарнă чухне сăмса шăтăкне пĕрер çырла чиксе выртни те пулăшать.

# Витаминлă кишĕр сĕткенĕ

Çак сĕткенре А,В,С,Е,К витамин нумай. Вăл апат ирĕлессине, шăл тытăмне лайăхлатать. Ун витĕмĕпе куçа, пыра, ÿпкене сиенлекен инфекци лекмест. Витаминпа пуян çимĕç пĕвере тасатать. Юхан-суранран, усал шыçăран сипленнĕ вăхăтра та кишĕр сĕткенĕ ĕçме сĕнеççĕ.

# Ыратнинчен – хупах тымарĕ

Çак ÿсен-тăранăн тымарĕ уйрăмах усăллă. Вăл халĕ те пурха. Хупах тымарне чавса кăлармалла, лайăх çуса типĕтмелле.

Вĕтетнĕ тымара тип çура пĕçермелле. Шăпах çу унăн сиплĕхне туртса илет. Çак çупа ыраттарнă вырăна сĕрмелле. Çавна май ыратни те хăвăртах иртет, ÿт те кăвакармасть.

*Халăх мелĕпе сиплениччен тухтăрпа канашламалла.*

ШУТА ИЛМЕ

- Пăрça е шалча пăрçи /фасоль/ пĕçерес умĕн ăна 3 сехетрен кая мар шывра тытмалла. Кайран тăвар хушмасăр шывра пĕçермелле. Шурă шалча пăрçине пĕçернĕ чухне вĕренĕ шыва тăкса çĕнни ямалла, пиçес умĕн 1-2 кашăк тип çу хушмалла.
- Пахча çимĕç пĕçернĕ шыва тăкма ан васкăр. Унпа килти чечексене шăварăр, вăл усăллă япаласемпе пуян.
- Чечеклĕ купăста хатĕрленĕ чухне ан тĕсне ан сухаттăр тесен турана ăна эмаль савăтра, кăшт лимон йÿçекĕ е уксус хушнă шывра пĕçермелле.
- Çĕр улмине ăшаланă чухне формине ан çухаттăр тесен туранă хыççăн ăна ал шăлли çинче типĕтĕр, çулăм çинче хĕрнĕ çатмана хурăр.
- Çăнăха, тăвара, кĕрпене, типĕтнĕ пахча çимĕçе нумай вăхăтлăха упрама хуричен лайăх типĕтмелле. Чи ансат меслет: вĕсене противень çине сарса 40-50 градус таран хĕртнĕ духовкăра алăкне хупмасăр тытмалла. Кайран пир хутаçа, тимĕр е кĕленче савăта хумалла, тачă витмелле. Вăхăт-вăхăт савăта уçăлтармалла.
- Хĕрлĕ кăшмана тăварлă шывра пĕçермелле мар. Ун пек вăл тĕсне, тутине çухатать.
- Пахча çимĕçрен хатĕрленĕ салатсене сивĕтмĕшре е сивĕре 12 сехетрен ытлашши тытмалла мар: пахалăхĕ чакать.
- Апат-çимĕç продукчĕсене тĕттĕм вырăнта упрамалла. Тÿррĕмĕн ÿкекен хĕвел пайăркисем сĕт-çуşăн, какайшăн уйрăмах сиенлĕ.

# Герань

Герань сывлăшри сиенлĕ микроорганизмсене пĕтерекен эфир çăвĕ кăларать. Унăн шăрши лăплантарать, ыйха лайăхлатать.

Юн пусăмĕ виçерен ÿссен 1 апат кашăкĕ чечекĕн вĕтетнĕ çулçине 1 стакан вĕри шыва ямалла, пĕчĕк çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, 1 сехет лартмалла, сăрăхтармалла та кунне виçĕ хутчен апат умĕн пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

# Йывăç кăмрăкĕ пулăшать

Сĕтел сунтăхĕнчен е шкапран ырă мар шăршă кĕрсен унта йывăç кăмрăкĕ хумалла. Икĕ-виçĕ сехетренех шăршă çухалать.

# Ăвăспа питĕрмелле

Йывăç сĕтел-пукан шăтăк-çуракне карас ăвăсĕпе питĕрме пулать. Ытлашшине йывăç калакпа е çĕçĕпе тасатмалла. Унтан çак вырăна йăлтăртатма пусличчен çăм татăкпа сăтăрмалла. Хура е хăмăр сĕтел-пукана йĕркене кĕртнĕ чухне ăваса сăрăпа хутăштарма юрать.



ЧУНРИ

# Ăçта эс, çăлăнăç карапĕ?



Эсĕ – карап. Çăлăнăç карапĕ. Шăпах мана кирлине епле туйрăн-ши? Çул çине йывăр чухне мĕнле килсе тухрăн-ши? Турă пултăн. Чĕрем çурăлнă, чунăм вутпа çуннă самантра персе антăн та ăшăмри пушара сÿнтертĕн. Тавах сана. Ырату çыранĕнчен хăпма пулăшрăн. Юхан шыв урлă тепĕр енне хам пĕччен ишсе каçайăттăм-и? Куççульпе тулнăскерте путса вилмĕттĕм-и? Юрату çыранне çитес тесе темччен асапланăттăм пĕччен...

Тĕрĕссипе, пĕр-пĕринпе чылай малтан паллашнă эпир. Эсĕ манăн ĕçтешĕм патне килсе çÿреттĕн. Эпĕ вара кĕрнеклĕ те илемлĕ арçынна асăрхамасăр ниепле те иртме пултараймарăм. Ыттисем те куç хываççĕ-тĕр сана. Епле чипер эсĕ – пĕр кашăкпа сыпса ямаллискер. Вăрттăн тинкерсе санпа пулма ĕмĕтленттĕм те хамăн шухăшăма çăрапа питĕрсе лартрăм. Ун пирки такам пĕлесрен хăранăн упрарăм ăна. Ĕмĕтĕме çапса аркатасран шиклентĕм.

Сан пек арçын сайра. Çавăнпах манаймарăм сăнна. Савнипе юнашар выртнă чухне те куç умне час-часах тухрăн. Сана тепре те пулин курасса шанса пурăнтăм. Ĕçтешĕм патне татах килессе кĕтрĕм. Эсĕ манăн ĕмĕтĕме сиснĕн пулмай кĕттермерĕн. Унран та ытларах – час-часах килсе çÿреме тытăнтăн. Епле савăнаттăм сана курсан. Хăпартланса юлаттăм. Сана савас, юратас килетчĕ.

Вăхăт иртнĕ май эсĕ те мана килĕштернине туйрăм. Арçын ахальтен ăшă куçпа пăхас çук, калаçмалли сăлтав шырас çук вĕт. Ăшăмри ĕмĕт кашни тĕл пулмассерен вăйланса та çирĕпленсе пычĕ. Сана курсанах ытамна ыткăнас килетчĕ. Хама епле тытса чараттăм-ши? Эсĕ тĕрĕс мар ăнланасран шикленеттĕм-тĕр. Çапла сана вăрттăн килĕштерсе пурăнтăм. Сисеттĕн-ши çакна? Паллах. Анчах туйăмсене усăмлатма васкамарăмăр.

Сана кăмăллаттăм пулин те савнине те юрататтăм. Унпа икĕ айккинелле уйрăлса кайни манăн чĕре суранĕпе чун ыратăвĕ пулса тăчĕ. Çак кĕтменлĕх ăшăма çунтарчĕ. Пушă киле таврăнас килменрен ĕç хыççăн час-часах парка чарăнаттăм. Шухăшăмсене йĕркене кĕртме тăрăшаттăм. Шăпах çакăн пек пĕр каç курнăçрăмăр та. Тахçантанпах курманччĕ пĕр-пĕрне. Пушă вăхăт сахалтан эсĕ ĕçтешĕм патĕнче нумайранпа пулманччĕ. Чун ыратăвне усрăм.

Эсĕ çакна çеç кĕтнĕ тейĕн. Час-часах шăнкăравлама пикентĕн. Ĕçе кĕрсе çÿреме пăрахрăн. Унта усçăн калаçма çук имĕш. Урама, кафене чĕнтĕн. Эпĕ вара çак тĕл пулусене савăнсах çÿреттĕм. Хам та сисмерĕм – сана тата та ытларах килĕштертĕм. Ырату манăçа тухрĕ.

Ытамунта мĕн тери ырăччĕ. Эсĕ çупăрласан лăпкă та канлĕччĕ. Хама çав тери телейлĕ туяттăм. Ăшшăн чуп тусан чĕрем тапма пăрахатчĕ тейĕн. Санпа чухне темле асамлăх тĕнчине путаттăм. Мĕн тери çепĕçчĕ аллусем... Пĕтĕмпех асра...

Çапла, халĕ пĕтĕмпех асăмра çеç. Темшĕн эсĕ пурнăçăмран пач çухалтăн. Кĕтмен çĕртен шăнкăравлама пăрахрăн. Сивĕнтĕн.

Пĕр-пĕрне юратнине туйсан та куçран пăхса кун пирки систермен: пĕрре аманнă чĕремĕрсене тепĕр хутчен асап кÿресрен хăранипех-тĕр. Тата та ытларах савса мансăр пурăнайми пуласран хăранипех çухалтăн-тăр. Туйăмсем ултавлă пуласран шиклентĕн-ши?

Эпĕ вара санран куллен шăнкăрав кĕтетĕп.

**ЯНА.**

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Каçараймарăм

Сергейпе юратсах пĕрлешрĕмĕр. Мĕн пур тус-тăвана пухса чаплă туй кĕрлеттертĕмĕр. Çулталăкран упăшкана ывăлпа савăнтартăм. Пĕчĕк пулин те, пурăнмалли кĕтес пурччĕ пирĕн, çынсем пек хваттер тара тытман. Алĕша сывлăш пÿлĕннипе хытă асапланнăран уйăхĕ-уйăхĕпе больницăра сипленме тиветчĕ. Çак вăхăтра упăшка улшăнние сисрĕм те. Пĕррехинче простынь çума пуçтараннăмĕн, машинăна мĕнле çутмалине пĕлмест. Эпĕ больницăран таврăнасса кĕтесшĕн мар. «Ман хура вырăн таврашĕ çинче çывăрмалла-им?» – тесе кăшкăрнă пулать тата. Шкапран тасине тупса илеймест имĕш. Киле çитнĕ çĕре урай тулли сарă çÿç çăмхаланса выртни те тĕлĕнтерме пăрахрĕ юлашкинчен. «Хăвăнах вăл, урăх камăн пултăр», – тесе тÿрре тухатчĕ кашнинчех. Те манса кайнипе, те ятарласа, шăккалат курупкисемпе тутлă эрех кĕленчисене те кăларса ывăтмастчĕ. Кайран манран телефонне пытарма тытăнчĕ. Троллейбусра та пирĕнтен вăрттăн калаçнине пĕрре мар асăрханă. Эпир илтесрен хăраса хыçалти алăк патне кайса тăратчĕ.

Пĕр каçхине часах çывăрма выртмарăм. Упăшкан кĕсйинчен телефонне вăрттăн кăларса илтĕм те кĕске çырусем вулама тытăнтăм. «Юратăвăм, хăçан пĕрлешетпĕр?» – текен СМСа курсан куç хуралса килчĕ. Надя ятлăскер çырать. Ман Сергей яла кайса унăн ашшĕ-амăшĕпе те паллашма ĕлкĕрнĕ иккен. Хайхи хĕрарăм патне çĕр варринче шăнкăравласа ятăм. Эпĕ хытă кăшкăрашнипе упăшка та вăранчĕ. Ман çине тÿрех кашкăр евĕр сиксе ÿкрĕ. Телефонне туртса илсе алла хыçалалла пăрса лартрĕ. Урса кайнă арçын пĕтĕм вăйран питрен çутăлтарса ячĕ. Çĕр варринче ачана хăратса полици чĕнес темерĕм. Йĕре-йĕре ун япалисене пуçтартăм. Йăлтах алăк умне купаласа хутăм. Икĕ пысăк михĕ пулчĕ. Ирхине вара пĕр шелсĕр урама кăларса ятăм. Çак куна çеç кĕтнĕ тейĕн, хаваспах тухса вĕçтерчĕ. Çапла уйрăлтăмăр.

Тĕрĕсех тунă иккен эпĕ. Надьăран çавах уйрăлмастчĕ вăл. Манпа хут уйăрттарнă хыççăнах туй кĕрлеттерчĕç. Ывăлăма пĕрре те пырса курмарĕ. Икĕ çул улталаса пурăннă вăл мана, эпĕ вара нимĕн те сисмен те. Ĕçрен ывăнса таврăннă хыççăн апат çименни пулкаланă-ха. Сăлтавсăрах пĕрмай хирĕçмелли тупатчĕ.

Эпĕ те ирĕклĕ хĕрарăм халь. Ачапа çеç пурăнатăп. Хама килĕшекен арçынсене пĕрне те вĕçертместĕп, авланнă-и, авланман-и, маншăн пĕртте пĕлтерĕшлĕ мар. Çук, çемье çавăрасшăн мар эпĕ. Лайăххисем тахçанах мăшăрлă, эрех-сăрапа иртĕхекеннисем кирлĕ мар. Пурнăçа пĕлме çук, йĕркелли, кăмăлăма каякканни тупăнсан, тен, çемье те çавăрăп. Хальлĕхе вара кичем мар. Упăшкисем айккинелле чупасран хăраканнисем ман пирки япăх шухăшлаççĕ пуль. Манăн та телейлĕ пулас килет-çке. Çын çемйине те ним мар аркатма пултаратăп. Упăшка пăрахса кайрĕ тесе халь пĕччен пурăнас-и? Мăшăра пачах качча кайса курманни туртса илчĕ. Чăтса иртертĕм-çке. Вăл мана, ман ачана шеллерĕ-и? Кĕсри кĕçенмесĕр ăйăрĕ пымасть теççĕ. Эпĕ мĕн чухлĕ куççуль юхтарнине пĕр турă кăна пĕлет.

Эпĕ те питĕ сăпайлăччĕ. Хĕрсемпе клуба тухас вырăнне каçсерен илемлĕ литература шĕкĕлчеттĕм. Шкулта та аван вĕреннĕ. Каччăсемпе çÿресе те курман темелле. Сергее пĕрре курсах кăмăлларăм. Çулталăк туслă çÿренĕ хыççăн туй кĕрлеттертĕмĕр. Пуринчен те телейлĕрех пулма, лайăхрах пурăнма ĕмĕтленеттĕм. «Епле хитре мăшăр», – тесе ăмсанатчĕç те пире. Пирĕн хушăран пĕр кĕтмен çĕртен хура кушак каçса кайрĕ. Çулталăк çурăри ачапа пĕчченех тăрса юлтăм. Вăйран кайнăччĕ, сăнран хуралса ларнăччĕ эпĕ çав вăхăтра. Калама çук йывăрччĕ мана. Çук, ниепле те каçараймарăм ăна. Вăл хăй те алăкран пырса шаккамарĕ. Эпĕ те пулăшу ыйтса шăнкăравламарăм.

**СВЕТЛАНА.**
Шупашкар хули.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Çирĕп тĕрĕслев

Юлташсем качча кайса пĕтрĕç. Манăн та çемье çавăрас килет. Юратаканнисем пур-ха, анчах тахăшне суйламалла? Çавăнпах яшсене тĕрĕслев витĕр кăларма шухăш тытрăм.

Тара тытнă хваттерте çĕмрĕк пукан пур. Ăна темиçе хут та юсанă, анчах çилĕмпе çыпăçтарманскер тĕкĕнсенех ишĕлсе анать. Тĕрĕссипе, хама та тарăхтарса çитернĕ вăл. Çапах çак пукан мана хăçан та пулин кирлĕ пуласса шухăшлама та пултарайман. Юрăхсăра тухнă япалана та кăларса пăрахма васкамалла мар иккен.

Каччăсем чей ĕçме кĕресшĕн. Юрать, хирĕçлеместĕп. Вĕсем сырпа кăлпасси, торт илсе кĕреççĕ. Çавăнпах манăн сивĕтмĕш пушанма та ĕлкĕреймест.

Хĕрарăм хăлхапа юратать теççĕ пулĕ. Юрату сăмахĕсемпе пуçа çавăрасшăн. Ыталама хăтланаççĕ тата. Тăхтăр-ха, хальлĕхе юнашар тăма та ирĕк паман. Кăшт каярах йăлт усăмланĕ.

Çамрăксене çĕмрĕк пукан çине лартатăп. Çук-ха, усал сунмастăп вĕсене. Манăн каччăсен кăмăлне палăртмалла, вĕсем ĕç майне пĕлнине ăнкармалла.

Хăшĕ-пĕри пуканпа пĕрле урайне ÿкнĕ май киревсĕр темиçе сăмах калама ĕлкĕрет. Ăçтан илтнĕ-ши тулккăш? Хĕр патĕнче унăшкал калаçни килĕшÿллĕх мар. Намăсланма та пĕлмеççĕ вĕт. Каçару ыйтасчĕ хăть. Чĕлхе чаракĕсĕр яшсемпе хутшăнас килмест.

Çав пукана майлаштарса лартайман каччăсем, паллах, ĕç тĕлне пĕлмеççĕ. Кайран, çемье çавăрсан, ăçта кайса кĕмелле капла? Кран юсанăшăн, сĕтел-пукан пуçтарнăшăн, картина çакнăшăн... ют арçынна укçа тÿлемелле-и? Э... çук вара, килтиех майлаштарса пытăр.

Ку тĕрĕслев нумайăшне килĕшмерĕ. Хăна пăхма пĕлменшĕн манах ятласа хăварчĕç. Хам патша майри пекех саркаланса ларатăп, вĕсене валли йĕркеллĕ пукан та илейместĕп имĕш. Эпĕ чĕрре кĕме хăнăхман. Тухса кайиччен хăйсен чунне тавăрса кăтартчĕрех. Тĕрĕссине калас тăк – вĕсен сăмахĕсене хăлхана та чикместĕп. Мĕн, ыттисен кăмăлне те пăсмалла-и?

Пĕри çеç мана шеллерĕ пулмалла. Çилĕм илсе кĕртрĕ те кивĕ çав пукана юсаса хăварчĕ. Çакăнпа тĕрĕслев вĕçленчĕ тесен те юрать. Телее, никам та суранланман, аллирине хуçман. Эпĕ çав яша качча тухрăм. Нимле ĕçрен те хăрамасть вăл. Халĕ акă урай сарать. Кирлех пулсан апат та пĕçерет, кил-çуртра та тирпейлет. Ăна мар тăк кама юратас манăн?

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**





*Альбина ИСЕМПИ*

# Кукăр тупан

Ĕлĕкех çапла ят панă ял вĕçĕнчи пĕчĕк айлăма. Вăл паянхи кунччченех сыхланса юлнă. Çуркуннехи-кĕркуннехи йĕпе-сапара унта урам урлă яланах шыв юхать, çавăнпа урана йĕпетесрен нумайăшĕ çăпата тĕпне кукăр тупан çирĕплетсе çӳренĕ. Мăнкун умĕн вара çын татăлман Кукăр тупанран. Хĕрарăмсем аслă уява хатĕрленсе кил-çуртра пĕр хура япала хăварман – йăлт çуса тасатнă. Урисене кукăр тупанлă çăпата сырса кунĕпе кĕпе-йĕм чӳхенĕ.

Çуркунне пуçламăшĕнче айлăмра тăптăрă шыв шăнкăртатса тӳлеккĕн юхать. Часах уй-хир тапранать. Унăн шывĕ шавласа-кĕрлесе, айăн-çийĕн çаврăнса-пăтранса Кукăр тупан тăрăх Мăн çырмана çĕмĕрттерет. Урлă хунă каççа ним те мар хускатса çĕклет, юхтарса каять. Ешĕл çерем çинчен таврăнакан сурăхсем ун çывăхне пыма та хăраççĕ, пĕчĕк путеклисем инкеке лекесрен – шывпа юхса каясран – тата хытăрах шикленеççĕ. Хăюллисем те пур-ха: ниме пăхмасăр темĕн çӳллĕш сике-сике каçаççĕ вĕсем. Анчах черченкĕ путексене пулăшу кирлĕçке. Хăшĕ-пĕри шуйханса амăшĕнчен çухалса юлать. Пĕчĕкскерсем макăра-макăра тĕлли-паллисĕр чупаççĕ. Юрать-ха ачасем маттур та пултаруллă, йĕпенсе пылчăкланнăскерсене, пашкаса сывлаканскерсене пурне те тыта-тыта шыв урлă каçараççĕ. Шӳтлемест шарлак шыв. Вăйлă çумăр хыççăн хур чĕпписене юхтарса кайни те сахал мар пулнă.

– Кукăр тупан тапраннă, асăрханullă пулăр! – хытарса каланă аслисем вĕтĕр-шакăра.

– Кукăр тупанра путек лачакана ларнă.

– Шашкă Сахрунĕн аттине Кукăр тупан çăтса янă тет, хе-хе, киле çарранах таврăннă хайхискер...

Çавăн пек тĕрлĕ хыпар час-часах янăранă ялта.

Мĕн-ха вăл «кукăр тупан»? Хальхи çамрăксем, паллах, пĕлмеççĕ ĕнтĕ. Ĕлĕк вара вăл ялта шыв-шурта питĕ кирлĕ япала шутланнă. Тупана йывăçран хатĕрленĕ. Çăпата виçине /тăршшĕне/ шута илсе икĕ пӳрне хулăнăш тăваткăлсем ăсталанă. Вĕсем çинче тăватшар шăтăк шăтарса çăпата пуçĕпе кĕли çине сăмала сĕрнĕ сӳс çиппи çирĕплетнĕ. Йĕпе-сапара унашкал çӳреме шанчăклăрах, тупан шыв сăрхăнса кĕме памасть.

Чăннипех чуна çывăх вырăн пулнă хайхи Кукăр тупан ял халăхĕшĕн, уйрăмах çамрăксемшĕн. Унпа çыхăннă хăш-пĕр çынпа пулăма асăнас килет. Сăмахран, çав вырăнта Алтати ятлă пĕччен карчăк пурăннă. Ăрăмçă тенĕ ăна ялта. Шуранка сăн-питлĕ те хытканскер, çулне кура мар патвар туйăнă вăл хăйне. Кăвакарнă хулăн çӳçне çурăм тăрăх сапаласа ярса вăрăм кĕпепе çӳренĕ, калпаклă аçамне çулла та хывман. Хĕрарăм нимĕнле ĕçрен те хăраман. Выльăх-чĕрлĕх усранă. Качакасемсĕр пуçне кил хуçи уйрăмах хĕрлĕ ĕнине юратнă. Манюк та ăна куçран пăхсах ăнланнă тейĕн. Турта хушшине тăма хăнăхнăскерпе кинемей пахча сухаланă-сӳреленĕ, вăрмантан вутă турттарнă. Алтати çатан карта та хăех авса тытнă. Пыл хурчĕ ĕрчетсе тутлă пыл юхтарнă пултаруллăскер. Выльăх пуснă чухне вара кӳршĕре пĕр-пĕр арçынран пулăшу ыйтма тивнех унăн.

Кама илĕртмест-ши ытарайми тавралăх. Алтати аппа та йывăç-тĕме юратнă. Тĕрлĕ сиплĕ курăк пуçтарса типĕтнĕ, кам та пулин пулăшу ыйтсан – тархасшăн, илĕр, усă курăр... Чăнах та, пĕррехинче пулăшăвĕ кӳршĕсен пĕчĕк хĕр ачине питĕ кирлĕ пулнă. Унăн мăйне харăсах икĕ çăпан тухнă. Сулахай хăлха айĕпе сарăлса карланкă таран шыçнă. Фельдшер хĕр пĕрчине çав тери хĕрхеннĕ пулин те ниепле те пулăшайманран больницăна илсе кайма шантарнă.

Хĕр ача амăшĕ макăра-макăра çырмана шыв ăсма кайнă. Унта Алтати аппана тĕл пулнă. Лешĕ Ирина сывлăхĕ пирки ыйтнă.

– Ай, вилет пулĕ хĕрĕм, вилет пулĕ... – нăшăклатнă куççуль витĕр хуйхăллă Çинави. – Ах, Алтати...

– Хĕвел анман-ха, киле çитсенех мунча хут, тутлансанах Иринăна илсе кай. Эпĕ часах пырăп, пултарнă таран сиплеме тăрăшăп, – лăплантарнă ăна ăрăмçă.

«Çитмĕл çичĕ курăк хуçи» ят илнĕскер, чирлĕскере мунчара сиплеме пуçăннă: чирне кура ятарлă курăк шывĕ ĕçтернĕ, шыçса ăшă милĕкпе шăлнă, пыл сĕрнĕ. Мунча хыççăн пĕчĕк хĕр канлĕ çывăрнă. Ирхине Ирина хăйне çăмăлрах туйнă, çимелли ыйтнă.

– Анне, ӳссен эпĕ тухтăр пулăп, – куçран чăр пăхнă вăл.

Амăшне ку кĕтмен хыпар питĕ тĕлĕнтернĕ. /Университетран вĕренсе тухсан Ирина, чăн та, врач пулчĕ/.

Тĕпренчĕк сывлăхĕ пирки пĕлес тесе Çинависем патне кӳршĕсем те кĕре-кĕре тухнă. «Ирина начар» текен хăрушă хыпара илтесрен шикленсе шăппăнраххăн ыйтнă:

– Ну, мĕнле?

– Самай пек. Апат çиет-ха, – хуравланă Çинави.

Пынисем хавасланса лăштах сывланă, ырă хыпаршăн савăннă.

Çапла Иринăна кăна мар, нумай çынна сипленĕ, ура çине тăратнă Алтати. Тен, çавăнпа ăна Кукăр тупан Алтатийĕ теме тытăннă. Куратăр-и, каллех çав илемлĕ вырăн. Вăл çынсене хавхалантарнă, вăй панă тейĕн.

Кукăр тупан ĕлĕкех ачасен юратнă вырăнĕ пулнă. Миçе ăру выляса ӳсмен-ши унта! Çав асамлă айлăм арçын ачасене пушшех илĕртнĕ. Тĕттĕмленсен те килĕсене час саланман вĕсем. Салтакла вылянă, стройпа утса юратнă юррине кашнинчех янăратнă:

> Ать-два-три!
> Купăста яшки вĕри!
> Анне, уйран ярса пар,
> Çăкри типĕ – тураса пар!

Хĕлле çулсерен Кукăр тупанта темĕн çӳллĕш юр хĕвет те, айлăмра вара вакун пек капмар сăрт çĕкленет. Ача-пăчана каллех савăнăç: йĕлтĕрпе, çунашкапа вирхĕнеççĕ, сăрт хытса-якалса çитсен вара хырăмпа е çурăмпа ярăнса çуйăхаççĕ. Нӳрелнĕ тумтир шăкăрт шăнса хытни нимĕн те мар вĕсемшĕн. Мĕн тĕрлĕ вăйă сиксе тухмасть-ши тата! «Атьăр, «Патшалла», – теççĕ те аслăраххисем, тĕреклĕреххисем сăрт тăррине хăпараççĕ. – Хам патша та – хам хуça!» – кăкăр çапса каçăрăлаççĕ. Никама та çывăха ямаççĕ. Тапăнакансене сире-сире, тĕке-тĕке яраççĕ: «Хам патша та – хам хуça!» Анчах хăватлă патшасем темĕнле курнăçлансан та пысăк ушкăн сĕтĕрсе антаратех вĕсене. Сăрт çинче чи нумай тытăнса тăраканни вара чи сумли шутланать.

Çурхи хĕвел ăшшăн кулса пăхать. Кукăр тупанри йăлтăркка шыв тăрăх ачасем кимĕсемпе карапсем ярса киленеççĕ. Йывăçран е хутран ăсталаççĕ вĕсене, пултаруллисем парăс та караççĕ. Эх, чĕвĕлтетеççĕ, эх хăпартланаççĕ вара пĕр-пĕрин хыççăн ишекен «Варягсемпе» «Аврорăсен» ячĕсене асăнса.

Унта, хĕвел питтинче, юр чи малтан ирĕлет, симĕс курăк шăтса вăй илет. Хĕлĕпе мечĕкшĕн тунсăхланă хĕр ачасемпе арçын ачасем вăйă пуçлаççĕ – чупа-чупа, сике-сике çĕре такăрласа хытараççĕ.

Пĕррехинче «Çапас та тарас» вăййа пикенчĕç вĕсем. Ачасен çывăхĕнчен хăнаран таврăнакан шавлă ушкăн иртсе пырать. Физика вĕрентекен те пур унта. «Тавсси!» те «тавсси!» теççĕ тĕл пулакансене, унтан юрă янăратма пуçлаççĕ. Хайхискерсем учитель пурăнакан çурт тĕлĕнче чарăнчĕç. Пулать вĕт кĕтмен япала: вăрăм та хытанка Наум çав самантра патакпа вирлĕн сулса çапрĕ те чикĕ вĕçне шăхăрса çитнĕ мечĕк Исак Ильича... пуçĕнчен ша-ап! тутарчĕ. Унтан çӳлелле сирпĕнсе кайăк пек вĕçрĕ. Ай, пĕтрĕ пуç! Куçне-пуçне чарса пăрахнă ачасем шанк хытса тăчĕç. Çавăнтах, ура айне вут хунăн, тĕрлĕ еннелле тапса сикрĕç. Юрать-ха пӳрт валли хатĕрленĕ пура юнашарах. Ачасем ун ăшне чăмрĕç, малашнехи ĕç-пуça пура айĕнчен сăнарĕç.

Наум пуринчен ытла хумханчĕ. Хĕрĕнкĕ хĕрарăмсем чышкисемпе юнаса: «Камсем пулнине пурне те пĕлетпĕр. Лекет-ха сире!» – тесе кăшкăрсан ыттисем те пăшăлтатма тапратрĕç.

– Нихăшне те мар, Ньютона лекрĕ вĕт...

– Хытах тиврĕ пулас – пуçне шăла-шăла илет... Ыран шкулта хăлха пăраççĕ ĕнтĕ. Эх-эх-эх!..

– Хăлха пăрсан çеç юрĕччĕ-ха, енчен те ăна касса пĕр вырăна сапламасан...

Çав самантра пылчăкланса пĕтнĕ Ирина пашкаса çитрĕ. Пĕр ури пушмаксăрах.

– Эпир сана киле тарнă тесе, – тĕлĕнчĕç пурте ун çине пăхса.

– Пушмаку ăçта? – ыйтрĕç хĕр ачасем.

– Пылчăк çине ларса юлчĕ. Каялла кайма хăрарăм.

– Пирĕн пĕчĕк Урине вараланă урине... – шӳтлерĕç арçын ачасем.

– Сирĕн ялан куласси, – кăмăлсăрланчĕ Вăрăм Люçса. – Илсе килсе парасчĕ пушмакне.

– «Тавссисем» Укках аппасем патне кĕрсе кайрĕç. Атьăр, шăвăнар кунтан, – вăшт çĕкленчĕ Илюш. Ачасем пĕрин хыççăн тепри пура айĕнчен йăшăлтатса тухрĕç. Наум Иринăн пушмакне чупса кайса илчĕ, тасатса хĕр ачана тыттарчĕ. Унтан шавлă ушкăн килĕсене саланчĕ.

Каçхине Наум темиçе те вăранчĕ, лăпкă çывăраймарĕ. Исак Ильичран часрах каçару ыйтас килнипе шкула иртерех çитрĕ ача. Шел, вăл кун учитель курăнмарĕ. Таçта кайнă терĕç.

Тепĕр кун çуркуннехи каникул пуçланчĕ. Иртни пирки никам та аса илмерĕ...

...Наумпа юлташĕсем шкул хыççăн малалла вĕренсе тĕрлĕ професси илчĕç, çĕр-шыв тăрăх саланса юратнă ĕçре тĕпленчĕç.

Пĕр çулхине тăван шкулта тĕл пулу каçĕ иртрĕ. Савăнăçлă уявра сăмах калакан нумай пулчĕ. Исак Ильич Оленина, хисеплĕ учителе, ура çине тăрса, алă çупса саламларĕç. Трибуна умĕнче нумай тытăнса тăмарĕ вăрçăпа ĕç ветеранĕ, сăмахне çапла вĕçлерĕ:

– Эпир, çăпатапа кукăр тупан сырса ӳснисем, çутă пуласлăх çитессе çирĕп шаннă, уншăн ырми-канми кĕрешнĕ, ĕçленĕ. Çитĕнекен ăру таса тӳпе айĕнче телейлĕ пурăнтăр тесе нумайăшĕ хăрушă вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухрăмăр. Сирĕн хушăра педагогсем, медицина, ял хуçалăх, культура ĕçченĕсем, спортсменсем пур. Раççей Федерацийĕн сывлăха сыхлас ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне Ирина Якимовăна, физикăпа математика наукисен кандидатне Наум Толстова, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учительне Светлана Солнцевăна тата ыттисене курма питĕ кăмăллă. Эпир сирĕнпе тивĕçлипе мухтанатпăр. Тайма пуç сире. Çакна каласшăн: сирĕн ачăр-мăнукăрсен нихăçан та кукăр тупан сырмалла ан пултăр. Пирĕн Кукăр тупан вара... – ветеран куçне хаваслăн çиçтерчĕ. – Вăл вара яланах пултăр. Шухăшлатăп та – пире пурне те вăл, Кукăр тупан, çывăхлатнă, çын тунă. Урăхла каласан, пирĕн чĕресенче юрату çуратнă, тăван яла, халăха, çак ытарайми вырăнсене ĕмĕрлĕхе ăша хывма вĕрентнĕ. Çапла мар-и?

– Çапла! – Пухăннисем малтан калаçса татăлнă пекех харăссăн хуравланă çак сăмах темĕнле уççăн-çĕкленӳллĕн янăраса кайрĕ.

– Эпĕ те çапла шухăшлатăп. – Ватă учитель хăйне хупăрласа илнĕ çынсем çине куççуль витĕр савăнăçлăн пăхрĕ.

Кайран «Кукăр тупанрисем» пĕр класа пуçтарăнчĕç. Ушкăн варринчи икĕ çутă пуç тӳрех куç тĕлне пулать.

– Конструктор юлташ, – чеен куç хĕсет ватти çамрăкки çине пăхса, – санăн та çӳç самай сайралнă. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тенешкел, эсĕ тахçан-тахçан пуç çийĕн ракета пек вĕçтернĕ мечĕк те манăн пахчана шаплатнă. Эпĕ ăна халĕ те упратăп. Акă вăл. – Наума пĕчĕк мечĕк тыттарчĕ учитель.

– Исак Ильич, эпĕ Сирĕн умăрта питĕ айăплă. Халĕ те пулин каçарсамăрччĕ мана, – хумханчĕ Наум Толстов.

– Эпĕ сире яланах каçарнă, каçаратăп та. Фронтра тăшман пульлинчен пуçăма хурçă каска хӳтĕлерĕ. Мечĕк вăл пуля мар – телейлĕ ачалăх, мирлĕ пурнăç палли. Çĕкленччĕр тӳпене тĕрлĕ тĕслĕ хăмпăсем, мечĕксем...

... Ах, Кукăр тупан, Кукăр тупан. Пысăк вăй-хăватпа туртатăн хăвăн патна, чунчĕрене çĕклетĕн, вăй-хал хушатăн – мĕнле юратмăн сана. Пурин те пулччăрччĕç вĕсем, çавнашкал асамлă вырăнсем, çынсене яланах ырăшăн тăма, усала хирĕç кĕрешме хавхалантарччăр.

**САВĂ СĔВЕМĔ**

# Эпир санпа...

*Зоя СЫВЛĂМПИ*

Вĕрентекен! Эпир санпа...
Юратрăмăр курсассăнах.
Калас пулсан чăнне,
Эс – иккĕмĕш анне.

Çакна хушса калам хамран:
Ырăпала çунса тăран
Таса чун ăшшине
Валеçрĕн кашнине...

Питех те туслă та хавас,
Тата хастарччĕ пирĕн класс...
Çĕр-шыв хакне пĕлме,
Унпа шав киленме.

Курма вăрман
илемлĕхне,
Таса тӳпе сенкерлĕхне,
Чунтан савма çĕре,
Вĕрентрĕн эс пире.

Нумай çул иртрĕ унтанпа,
Çук, тавăраймăн ылтăнпа
Халь çав вăхăтсене...
Манаймăн вĕсене...

Тавах сана, телейлĕ пул.
Хăвна упра. Пĕл: сывлăх – мул!
Чунпа, вĕрентекен,
Эпир – санпа, ĕнен...

Левтина МАРЬЕ

# Мăшăрсăр пурăнса çитет

И... ара, пĕччен пурнăç – пурнăç та мар. Çамрăклах качча пачĕç те мана, туххăмрах вилĕ ача çуратрăм. Манăн курпунлă, шур сухаллă ватă старик пурăнса йăлăхрĕ пулас, вăхăчĕ çитсен леш тĕнчене хаваспах таплаттарчĕ. Эпĕ вара, вĕри чунлă хĕрарăм, çулталăк иртнĕ-иртмен: «Мăшăрсăр пурăнса çитет», – тесе ялта арçын шырама пикентĕм. Манран кăшт аслăраххи патне чупса кĕрсе: «Епхин! Шыв ĕçтер-ха! Атту пуç çаврăннипе халех вилетĕп!» – тесе унăн сарман кравачĕ çине вĕлт йăванса кайрăм. Хăрах куçăма вăрттăн уçса пăхрăм та, айтурах, чупкалать кăна манăн кÿршĕ. Пĕр курка шыв йăтса пычĕ те: «Таиç, тархасшăн, ĕçсем, тулĕк ан вил», – тет чĕтрекен сассипе. Эпĕ ăна ярса илсе хыттăн чуп турăм та Епхин анраса кайнипе тăнне çухатса çавăнтах урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ. Эпĕ сиксе тăрса: «Тьху! Мемме эсĕ! Юратма та пĕлместĕн!» – тесе пуçăма каçăртса меллĕн тухса шăвăнтăм. Тепĕр кун ирирех киле пырса ватă хусах манăн умра чĕркуçленчĕ те: «Сансăр пĕр кун та, пĕр çĕр те пурăнма пултараймастăп! – терĕ. – Тухсам мана качча!» «Питех те мана качча илессÿ килсен пыратăп, енчен те эсĕ пурлăхна манăн çине куçарса çыратăн пулсан». «Паянтан манăн мĕн пур – санăн пулать!» – терĕ савăннипе пĕтĕм ял илтмелле кăшкăрса. Тепĕр икĕ кунран пĕрлешрĕмĕр те. Виçĕ уйăхран хăраххăн пурăнакан кума патне хăнана кайрăмăр. «Мăшăрсăр пурăнса çитет! – терĕм ăна хĕрхенсе, Епхин урама туртма тухсан. – Качча тух та ман пек саркаланса кăна çÿре». «Эх, кума, паян тесен паян качча тухăттăм, анчах та илекен çук вĕт-ха. Эпĕ сан пек пултараймастăп-çке...» – терĕ вăл хаш! сывласа. «Ăна эпĕ тахçантанпах вăрттăн юратса пурăннă, – çав тери именсе калать мĕскĕн кума. – Халĕ вăл санăн-çке...» «Мĕнех вара, паян манăн, ыран санăн пулать. Манăн кăна старикпе савăнса пурăнмалла мар, эсĕ те ырă кур». «Эх, кума...» – шалт тĕлĕнсе кайрĕ вăл. «Ак кĕрет те эпир ăна ĕçтерсе ÿсĕртĕпĕр, кунтах çывăрса кайĕ. Эпĕ ăна киле пырсан кĕвĕçнĕ пекки тукаласа кĕртместĕп. Çавă кÿреннĕ пек туса хыттăн каласа хутăм та çĕлен евĕр авкаланса малалла уттартăм. Сирень тĕми патне çитсен мĕн тăвать-ха ку тесе вăрттăн çаврăнса пăхрăм. Микула çаплипех пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçса çăвар карса тăрать. Тепĕр кунах каç пулттипе çак çын ман пата вĕçтерсе те çитрĕ. Аллинче пĕчĕк хĕрлĕ курупка. «Таиç, сана паян хам куртăм тĕлĕкре. Чуп турăмăр çеç». Çапла майпа тинех кумана качча патăм. Ай-яй, халь вĕсем пĕр-пĕрне юратса пĕтерейместĕç. Епхин ман çине çырнă кил-çуртне аслă хĕрĕме парнелерĕм. Çавăнтах ăна качча парса туй кĕрлеттертĕмĕр.

Тепĕр уйăхран урамра ăнсăртран ват хусах Микулана курсан: «Ара, паян ирхине сана тĕлĕкре курсаччĕ», – тетĕп. «Чăнах-и?! – çав тери тĕлĕнчĕ вăл. – Мĕн тăваттăм вара эпĕ санăн тĕлĕкÿнте? Вутă çурмастăм пулĕ те?..» «И, каларăн та, вутă çурма... – чеен кулатăп эпĕ. – Каласа пама та ай-яй! ытла намăс-çке!.. Мунчара пек, айтурах!» «Вара, вара?..» – çине тăрса тĕпчет ватă хусах. «Иксĕмĕр те сентре çине хăпарса ларнă, пĕр-пĕрин çине пăхса киленетпĕр пек...» – хам вилсе кайса кулатăп ĕненерес тесе. «Паянах мунча хутатăп! Таиç, манпа пĕрле мунча кĕме пырсамччĕ», – терĕ автан пек майне тăсса. «Малтан качча ил! Вара мунча çинчен калаç!» – пек, – тет. – Ĕмĕрне те авланмастăп тенĕччĕ, анчах та çиçсе тăракан кăн-кăвак куçу тата çип-çинçе пилĕкÿ мана канăç пами пулчĕ. Паян ирех Шупашкара кайса сана валли куçлă çĕрĕ туянса килтĕм. Качча тухма килĕш кăна». «Кунсăр пуçне тата мĕн парнелетĕн-ха?» – тесе ыйтатăп эпĕ çĕрĕ çине куç хĕррипе пăхкаласа. «Манăн мĕн пуррипе çырлахсассăн йăлтах санăн пулĕ!» – терĕ вăл аллăма çĕрĕ тăхăнтартса. Тантăшăм пĕччененех пурăнни чуна вуçех хурлантаракан пулчĕ. «Эх, Таиç, эсĕ ытла та телейлĕ-çке», – тесе ăмсанать вăл кашни курмассерен. «Итле-ха, тусăм, сана манăн Микула килĕшет-и?» – тесе ыйтрăм пĕррехинче. «Килĕшмесĕр...» – терĕ вăл хĕп-хĕрлĕ пулса кайса. «Апла тăк сана та мăшăрсăр пурăнса çитет! Паянтан пуçласа эпĕ чирленĕ пекки тăватăп. Ăна сан пата эмел илме ярсан эсĕ картпа юмăç пăхса яр. Арăму йывăр чирлет тесе манран сивĕтме тăрăш. Хыççăн тутлă коньяк ĕçтерсе ÿсĕрт те унăн умĕнче ирччен юрласа, ташласа тăр. Ун пек тунине вăл сĕре юратать. Юрать-и?» «Юрать, паллах. Тавах сана тантăшăм, ĕмĕр манмăп», – терĕ вăл ниçта кайса кĕрейми савăнса. Çапла майпа Микула манран час хăпрĕ те тантăшăмпа пĕрлешрĕ. Ман çине куçарса çырнă кил-çуртне тÿрех ывăлăма парнелерĕм. Часах ăна та авлантарса чаплă туй турăм.

Пĕррехинче тата пÿртре ытла та пăчă пулни пирки чÿречене яри уçса урамалла пăхса ларатăм. «Ах, çав тери кичем-çке пĕччен пурнăç!.. – тесе хаш! сывлама ĕлкĕртĕм çеç, шăп çав вăхăтра урампа тепĕр ватă хусах Кĕркури хăйĕнпе хăй тем пакăлтатса утнине курах кайрăм. Хуларан ашшĕ-амăшĕ патне хăнана килнĕ пулас, халĕ ял тăрăх пуçне каçăртса уçăлса çÿрет. Яштака пÿ-силлĕ, кăп-кăтра çÿçĕ çамки çийĕн явăнать. Чаплă симĕс костюмпа, кĕпи шапшурă... Ай-яй, чĕрем кăртах турĕ. «Кĕркури! – тетĕп. – Салам! Кĕрсем кукăль çиме! Халь кăна кăмакаран кăлартăм!» «Салам, Таиç! Çĕр улмипе ан кукли мар пулĕ те?!» «Çавă пулмасăр! Эсĕ яла килет тенине илтрĕм те ятарласа пĕçертĕм!» – тетĕп хайхискер. «Апла пулсан кĕретĕп! Сăри пур-и?» «Пулмасăр! Кăпăкланса кăна тăрать, аншарли те çумĕнчех, сана кĕтсе ывăнчĕ!» Вăл кĕриччен эпĕ арчаран чи шукăль пурçăн саппуна кăларса çыхрăм, çÿçĕме тураса якатма та ĕлкĕртĕм. «Ман килес!» – тесе алăка уçса кĕрсенех эпĕ кăшт макăранçи туса илтĕм. «Ах, Кĕркури, эпĕ сана шкулта вĕреннĕ чухнех юратса пăрахнăччĕ те... калама çеç хăяйман», – тесе тăрăшсах суятăп. «Ан калаç! Чăнах та-и?! – тĕлĕнет вăл куçне тем пысăкăш çаварттарса, çамки çинчи тарне шăлса. – Пĕлнĕ пулсан!..» «Ара, кая юлман-иç, анчах та эсĕ пĕлни мĕн усси, çавах нихăçан та авланас çук. Атя, ун çинчен урăх калаçмăпăр, – тетĕп юриех ун умĕнче авкаланса. – Сĕтел хушшине ларсам, çуттине ĕçсе парсам. Халĕ çисем кукăльне, тăпăрчă-пÿремечне, ак шăрттанĕ сан умра, эсĕ кунта хăнара!» «Ай-яй тутлă-çке! – тесе ĕçет Кĕркури, хăй çăвар тулли чăмлать. – Кампа кăна паллашмарăм пулĕ, анчах та нихăшĕ те сана çитеймеççĕ. Çав тери кахал, пĕсерме пĕлмеççĕ, ачаш сăмах илтме çук. Вĕсене укçа кăна пултăр. Ахалех хулана кайса хваттер туянтăм. Ялтах пурăнмаллаччĕ. Шел, эсĕ пĕччен мар». «Эпĕ упăшкаран уйрăлни пĕр уйăх çитрĕ», – тетĕп хурлăхлăн. «Чăнах-и?! – сиксе тăчĕ Кĕркури. – Апла пулсан эпĕ сана никама та памастăп! Атя, пĕрлешĕпĕр те ĕмĕр пĕрле савăнса пурăнăпăр!» «Тем тумалла ĕнтĕ, – иккĕленнĕ пекки тăватăп. – Кĕçĕн хĕрĕм умĕнче выртса тăма та намăс вĕт-ха». «Ан кулян, эпĕ ăна хваттере парнелетĕп те хам яла сан пата куçатăп. Килĕш, Таиç. Сан пеккине тĕл пулайманнипех хĕрĕх пилĕк çула çитиччен авланаймарăм вĕт. Эпĕ сана йăтса çÿрĕп, чаплă машина çине лартса Мускава капăр тум илме кайăпăр». «Сана качча тухма килĕшетĕп эппин... Мăшăрсăр пурăнса çитет», – терĕм ăна чуп туса.

# Арçынна сутă кирлĕ мар çав...

«Сутă пур вĕт паян», – терĕ çеç ман арçын, çыхăну татăлса та кайрĕ. «Мĕнле сутă?» – теме çеç ĕлкĕртĕм. Тепĕр тесен кун пирки шухăшлама вăхăт та çук. Пепкемпе килте ларнă май 3 хут нумайрах темĕн тĕрлĕ ĕç пурнăçлама ĕлкĕретĕп».

Ваннăйра урай çума пуçласан вара чукмарпа çапнă пек хуравĕ тăнк! пуçа пырса çапрĕ. Ара, çакăнти сутă пирки сăмахлать-иç. Эрне унта телефон сутипе кĕрсе çÿреме тиврĕ. Ман арçыннăн вĕçĕм вăхăт çук.

Вăл ир-ирех ĕçе тухса каять те киле çĕрлесенче кăна таврăнать. Манăн мĕн тумалла? Пĕр кун çук, тепĕр кун. Капла ĕç каймасть-ха тетĕп. Виççĕмĕш кунне упăшка ĕçрен килнĕ тĕле вăл юратакан çĕр улми кукăльне пĕçерсе хутăм. «Турăхпа е хăймапа çиетĕн?» – тапăртататăп кăна ун умĕнче. Юптара-юптара сăмах каллех ваннăй патне çитрĕ. «Сутă пулатех», – тенипе çырлахрĕ ку хутĕнче те вăл.

Эрне вĕçнелле йăпăлтатма-и унта? Тарăхнăран çÿç вирĕлле тăманни кăна. «Ăса вĕрентмелле-ха ăна, анчах мĕнле?» – тесе пуç ватма тытăнтăм. Кăшкăрашни пулăшмасть, пĕлетĕп. «Арçынна тутлă апатпа çавăрмалла», – теççĕ-и-ха? Çук, пустуй сÿпĕлтетÿ кăна ку. Вăн, кукăле мĕн чухлĕ какай ятăм та усси пулмарĕ: сутă мĕнле пулман – çаплах çук.

«Натюшăм, – йăпшăнать ман çумалла хайхи. – Ачасем çывăраççĕ... текех чăтăм çук. Иртнĕ эрнере пуç ыратать терĕн...» Тутаран сĕртĕнчĕ çеç, шарт! çыртасса пачах та кĕтменччĕ ĕнтĕ вăл. Хамшăн та ку кĕтмен çĕртен пулчĕ: ваннăйра тĕттĕм пулни пирки тарăхса çитнĕччĕ çав эпĕ. «Сутă тумасăр ан та тĕкĕн!» – саккун евĕр пат! çавăрттарса хутăм çийĕнчех.

Ух, çав арçынсене! Кун хыççăн пушшех такана аса илтерекен пулса кайрĕ: тапсан та, çапсан та, йăпатсан та выртăнтан хускалмасть вĕт. Мĕн тумалла? Электрика чĕнме лекрĕ.

Пĕлесчĕ сирĕн, упăшкашăн пите епле хĕретме тиврĕ. Эрне татса парайман ыйтура специалист çеккунтра йĕрке турĕ! Сутă! Анчах хăй темшĕн кулать. Калăм укçине тăсрăм та пушшех ахăлтатса кулса ячĕ: «Мĕскер эсир, лампочкăна вĕçне çити пăрса лартнăшăн-и?»

Вăт качча кай, лампочка лартма вĕренмен-ха, ачине вара иккĕ таранах «чутласа кăларчĕ». Кăна валли шăпах сутă кирлĕ мар-ха та. Ларатăп халĕ килте, диплома та арчана ывăтма тухрăм.

Тем вăхăтран упăшка шăнкăравларĕ. Ну, калаçу мĕнле вĕçленнине пĕлетĕр эсир. Суттийĕ пур-ха та, анчах темшĕн манăн ăна халь электрика вĕренме ярас шухăш çуралчĕ. Унăн ĕç укçине шутлама экономист дипломĕ кирлĕ-и? Лампочка лартма пĕлни вара кирлĕ...

**Н.МАРИНОВА.**

# Пăнчăлли



Микиш пиччесен ĕни кăçал ытти сулхинчен каярах пăрулерĕ. Çавăнпа, çу уйăхĕ çитрĕ пулин те, килтисем пĕчĕк тынашкана кĕтĕве яма тăхтарĕç, урама кăларма та васкамарĕç. Çителĕклĕ сĕт çиекен пăру ÿт хушсах пычĕ, картишĕнче хÿре таратсах ĕрĕхсе çÿреме пуçларĕ. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл чăхсем шуйханчĕç те унран пытанма вĕренчĕç. Шухăшкерĕн кайри урисем пушшех хытă «ĕçлессĕ» тата: асăрханаймасан такама та вирлĕн шаплаттарса каçăхтарса яма пултарать. Выляма кăна мар, пĕчĕк ача пек ачашланма та юратать вăл. Çепĕçлĕхе самантрах туяканскер мучи çумнех сĕртĕнет. Вара шурă çурăмлă хĕрлĕ пăрава лăп-лăп! лăпкаса ăшшăн калаçать çитмĕлтен иртнĕ старик.

Пăрушкан çамки çинче шурă пăнчă пур, çавăнпа тăваттăри Максăм, мучин мăнукĕ, ăна Пăнчăлли теме пуçларĕ. Сĕт «ачисем» иккĕшĕ питĕ туслă. Пĕр кунхине, Пăнчăлли апат витри тĕпне çулланнă хушăра, арçын ача унăн мăйĕ çине утланса лармасăр чăтаймарĕ çав. Сисеймерĕ те – ялт! çĕклерĕ пуçне тăвата уралли, куç хупса иличчен тăпăрт-тăпăрт! тĕпĕртеттерчĕ хапха патнелле.

– Асатте! Ÿксе юлап, чар-ха ăна! Урăх утланмас, асатте! – ыткăнать сехри хăпнă «юлан утçă».

Юрать-ха аслашшĕ ăна çĕре анма вăхăтра пулăшрĕ: «Ÿлĕм ăслă пул, ачамккă. Тиха мар вĕт вăл. Мĕн çине утланмаллине пĕл. Унсăрăн пуçна шăтарăн», – лăплантарчĕ мăнукне Микиш пичче.

Пăрава курăк çиме хăнăхтарас пирки ывăлĕпе кинне темиçе те асăрхаттарчĕ ашшĕ, анчах лешсем пĕчĕкскере çерем çине кăлараймарĕç-ха. «Çамрăк-ха вăл», – хуравларĕç вĕсем кĕскен. Аслăк çийĕнчи çемçе утта çĕлĕк пысăкăш пек антара-антара пачĕç. Тавралăх ешернĕ вăхăтра вылях кил хушшинче тăни килĕшмерĕ аслине. Ытти пăру, ав, çатăртаттарать те çатăртаттарать сĕтеклĕ курăка. Чăтаймарĕ канăçсăр чун, вĕрене çатăрларĕ те пăрава урама çавăтса тухрĕ. Ирĕке туйнă Пăнчăлли йăлтти-ялтти сикрĕ, палтти-палтти пăркаланчĕ те чу-у-прĕ тиха пек выляса. Хуçи ăна чараймарĕ. Вĕрен аллине касса ыраттарчĕ пулин те картаран тытма ĕлкĕрчех вăл. Унтан вĕрен шалчине çĕре тирĕнтерчĕ. «Турăçăм, чăлах юлма та пулать капла», – хашка-хашка мăкăртатрĕ Микиш хытах ыратакан кача пÿрнине сĕркелесе.

Ку мыскара хыççăн пăрава ывăлĕ Витали çавăтса çÿреме пуçларĕ. Ĕрĕхсе чупакан вылях ăна та сĕтĕрчĕ, алли-урине те кăвакартрĕ. Кăкарса вĕренре тăма пĕлменскер юнтарса турткаланчĕ, çыхланса ларчĕ. «Ватă çын сăмахне итлемеллеччĕ, пăрава маларах алла вĕрентмеллеччĕ», – шухăшларĕ вăй питти арçын.

Вăхăт ăна та тÿрлетрĕ. Пăнчăлли кутăнлашма пăрахрĕ, ытти пăрупа пĕрле лăпкăн çÿресе курăк çирĕ. Çапла çав. «Ватти ăспа пулăштăр, çамрăкки вăйпа пулăштăр», – тесе ахальтен каламаççĕ халăхра.

**Альбина ВАСИЛЬЕВА.**

## И-ХИ-ХИК

– Ну, еплерех сан йытту?

– Ӗнер пӗччченех уҫӑлса ҫӳренӗ май машина айне пулнӑ.

– Вилнӗ-и?

– Ҫук! Пӑрҫасем ветеринара чӗнсе илме ӗлкӗрнӗ.

* * *

Иккӗмӗш класс ачисен амӑшӗсем калаҫаҫҫӗ.

– Эсӗ математикӑпа килти ӗҫ тунӑ-и?

– Тунӑ.

– Ҫырса илме пар-ха.

* * *

Амӑшӗ ывӑлне:

– Ҫак таранччен ӑҫта ҫухалса ҫӳрерӗн?

– Эпир Вовӑпа почтальонла вылярӑмӑр. Поселокри мӗн пур ҫынна ҫыру валеҫсе тухрӑмӑр.

– Ҫавӑн чухлӗ ҫыру ӑҫтан тупрӑр?

– Сан тумбочкӑран.

* * *

Телефон шӑнкӑртатать. Вовочка тытать.

– Сире кам кирлӗччӗ?

– Аҫу килте-и?

– Ҫук, вӑл таҫта кайнӑ.

– Канма-и?

– Ҫу-у-у-ук, вӑл аннепе кайнӑ.

* * *

–Атте, эсӗ аннепе мӗнле кун тӗл пулнӑ?

– Ӑнӑҫсӑр...

* * *

– Пурне те! Пурне те! Пурне те! Мускав налук полицийӗн ывӑлӗ ҫухалнӑ!

Уйрӑм паллӑсем – подполковник...

* * *

Ӑслӑ хӗрарӑм упӑшки ҫине нихӑҫан та кӑшкӑрмасть, мӗн тумаллине лӑпкӑн кӑна хушать.

* * *

– Аван мар та аван мар теҫҫӗ... – мӑкӑртатать арҫын. – Вӑл сан ачусем пурте кӳршӗ сӑнлӑ пулсан, чӑнах та, аван мар... Е кӳршӗн пепкисем сан евӗр тӗк...

* * *

Вӑл ялан ҫапла: каҫхине ӗҫ пӗтерсе компьютер умне вырнаҫса ларатӑн ҫеҫ – ывӑл вӑранать те шкула хатӗрленме пуҫлать.

* * *

– Вовочка, шкулти лару-тӑру ҫинчен каласа пар-ха, – кӑсӑкланать ашшӗ.

– Йӑлӑхсах ҫитрӗм. Вӗрентекен темӗн те пӗр ҫинчен ыйтать. Хӑй нимӗн те пӗлмест ахӑр.

* * *

Сан пек хыт кукара качча тухмастӑпах! Венчет ҫӗррине те ил.

– Курупки ӑҫта вара?

* * *

Пуян ҫын пӗр вӑхӑтрах темиҫе ҫӗрте пулма пултарать. Тӗслӗхрен, курортра тата федераци шыравӗнче.

* * *

– Ҫав тухтӑр асамҫӑ пекех. Вӑл арӑма пӗр минутра сыватрӗ.

– Мӗнле майпа?

– Пӗтӗм чир ватлӑхпа ҫыхӑннӑ терӗ те.

* * *

Федерацин хӑрушсӑрлӑх службин шанӑҫ телефонӗ-и ку? Ята палӑртмасан та пулӑшатӑр-и?

– Паллах, Вячеслав.

* * *

Упӑшка килтен тухса кайрӗ-и? Апла тӑк унӑн еркӗнӗн мӑшӑрӗ теприне пурӑнма пуҫланӑ... Ан пӑшӑрханӑр, камӑн та пулин упӑшки сирӗн пата килетех. Пур арҫын та мӑшӑр шырать вӗт.

* * *

– Чунӑм, пӗр-пӗрне юратнинчен пӗлтерӗшлӗреххи нимӗн те ҫук ахӑр, – тет мӑшӑрне ҫамрӑк арӑм.

– Килӗшетӗп санпа. Чим, апат пӗҫерме лартнӑ-и?

* * *

– Автомашина ҫӗмӗрӗлчӗ, маччаран шыв юхать, эсӗ вара сӑвӑҫа качча тухасшӑн, – кӑмӑлсӑр калаҫать ашшӗ.

* * *

Икӗ хӗр тӗл пулнӑ.

– Манӑн савни ытла та лайӑх-ҫке, анчах тӗл пулӑва сухал хырмасӑр килет.

– Ара, эсӗ хӑв кая юлса ҫӳретӗн вӗт.

* * *

Хӗрарӑм – экзаменри вӗрентекен пекех. Хатӗрленетӗн, йӑлт каласа кӑтартатӑн... Вӑл хушма ыйту парать те йӑлт пӑтраштарать.

* * *

Вовочка шкултан таврӑннӑ.

– Мӗн турӑр-ха паян? – ыйтать асламӑшӗ.

– Хими урокӗнче сирпӗнекен япаласемпе опыт ирттертӗмӗр.

– Ыран тата шкулта мӗн тӑвӑр?

– Мӗнле шкулта, асанне?

* * *

Вовочка урама пуҫтарӑнать, пушмакӗ ҫийӗн калуш тӑхӑнать.

– Вовочка, урамра типӗ пылчӑк ҫук, – асӑрхаттарать амӑшӗ.

– Тупатӑп эпӗ... – тет арҫын ача.

* * *

Арӑмӗн ҫуралнӑ кунне манса кайнӑ кун нихӑҫан та асӑртан тухмӗ.

* * *

Укҫасӑр арҫыншӑн хӗрарӑм хӑрушӑ мар.

* * *

– Мӗнле тутлӑ салат! – мухтать упӑшки арӑмне каҫхи апатра. – Хӑвах туянтӑн–и?

* * *

– Кӗҫех 30 градус таран сивӗ пуласса пӗлтерчӗҫ.

– Синоптиксем-и?

– Ҫук ҫав, энергетиксем.


## РЕКЛАМА ТАТА ПӖЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 8-961-339-33-63.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 8-906-135-52-41.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, **песок,** керамзит, **бетон,** чернозём, **навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 8-902-327-75-85.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, бой кирпича.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**513.Чистка колодцев. Т. 8-961-342-90-59.**

**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

**657.Защита от коллекторов.** Т. 68-73-00.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**636.ТРЕБУЮТСЯ** в Новочебоксарск **операторы ТПА** /обучение без отрыва от производства, з/п сдельная, график работы 2/2/. Т/ф: 73-03-08, 74-11-81.

**656.Менеджер.** Т. 89093026764.

### СУТАТӐП

**580.ҪУРТ** /газ, шыв пур/. **Элӗк р-нӗ, Вылпасар.** Т. 89278572354.


### Иртнӗ номерте пичетленнӗ сӑмах каҫмӑш хуравӗсем:

**СЫЛТӐМАЛЛА:** 5. Шаланкӑ. 6. Пӑрахут. 9. Ҫӑмӑлттай. 10. Курс. 12. Хӑма. 13. Калав. 16. Уртӑш. 17. Хамса. 18. Пират. 19. Тӑрна. 24. Милӗк. 25. Ялав. 26. Кивӗ. 27. Корректор. 29. Аппарат. 30. Куланай.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Манкурт. 2. Анӑҫ. 3. Урай. 4. Хушамат. 7. Пӑлан. 8. Утрав. 11. Старшинов. 12. Хапсӑнчӑк. 14. Ҫӑвар. 15. Ҫарӑк. 20. Салампи. 21. Витре. 22. Тӗрке. 23. Кӑвакал. 27. Карп. 28. Руль.

## ШУТА ИЛМЕ

### Кӗмӗл ан хуралтӑр тесен

Кӗмӗл вӑхӑт иртнӗ май тӗксӗмленет – ҫакна пурте пӗлеҫҫӗ. Вӑл ан хуралтӑр тесен чи малтан эрешсене мӗнле япаласемпе юнашар упрама юраманнине пӗлмелле. Ҫакна шута илсен капӑрлӑхсене эмелсемпе юнашар хумалла мар. Кӳкӗрт сывлӑшӗ кӗмӗле хуратать. Эрешлӗхсене сывлӑшри нӳрӗ, пысӑк пӳлӗмсенче те хӑвармалла мар. Кӗмӗл йӗпене те килӗштермест. Яланах ҫакса-тӑхӑнакан капӑрлӑха шывран, паллах, сыхлама ҫук. Вӗсене эрнесерен супӑньпе ҫумалла, бархат пусмапа якатмалла.

### Нашатырь спирчӗ

Кӗмӗле нашатырь спирчӗпе те тасатма пулать. Вӑл ювелир лавккисенче сутӑнакан ятарлӑ шӗвексенчен самай йӳнӗрех, пахалӑхӗпе вара пӗрре те кая мар. Нашатырь усӑ курнӑ чухне хаклӑ йышши чуллӑскерсене хутӑштарман спиртпа сӑтӑрма юраманнине ҫеҫ ас тумалла. Чуллӑ эрешлӗхсене 1 стакан ҫине 5 тумлам нашатырь янӑ шывпа сӑтӑрмалла. Вӑчӑрасене вара 10 процентлӑ спиртра 10-15 минута ним хӑрамасӑрах чикмелле. Шывпа ҫуса типӗтмеллине ан манӑр.

«ХЫПАР» Издательство ҫурчӗ" автономи учрежденийӗ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССӐЛЛӐ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССӐЛЛӐ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ҪУРЧӖ" ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙӖ

Директор – тӗп редактор тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Г.А.МАКСИМОВ

Чӑваш ХӖРАРӐМӖ

Ҫырӑнмалли индекс: 11515

Редакторшӑн – Е.М.АТАМАНОВА

Дежурнӑй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаҫата Федерацин ҫыхӑну, информаци технологийӗсен тата массӑллӑ коммуникацисен тытӑмӗнчи тӗрӗслев службин 2013 ҫулхи ака уйӑхӗн 30-мӗшӗнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленӗ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСӖ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчӗ, 13, Пичет ҫурчӗ

**ЫЙТСА ПӖЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаҫатри рекламӑсӑр тӳлевлӗ информаци материалӗсем "Реклама ҫинчен" Федераци саккунӗн 2 ст. килӗшӳллӗн **"Аталану ҫулӗпе", "Ят-сум", "Ӗҫ тата ҫын", «Самана таппи»** рубрикӑсенче пичетленеҫҫӗ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алӑ пусмалла, 19 сехетре алӑ пуснӑ. Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» АУ техника центрӗнче калӑпланӑ, «Чӑваш Ен» ИПК» АУО типографийӗнче пичетленӗ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ, 13. 56-00-23 – издательство директорӗ. Тираж 7875. Заказ 3773.